Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 15 ВЫРСАРНИКУН
109 (4922) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Парторганизацисен районсенчи пухăвĕсем умĕн

Чăваш парторганизацинче пур пуçламăш организацисенче те отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Пайантан пуçласа районсенчи парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем ĕçлеме тытăнаççĕ.

Пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, партин шалти демократине çирĕппĕн пăхăнса, критикăпа самокритикăпа анлăн, хăйулăн сарса йапа никĕс çинче политикăлă пысăк идейлăхпа иртрĕç. Пуçламăш парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем пирĕн парти организацисем Парти Тĕпкомĕн 1937 çулти февраљ-мартри пленумĕн решенисене пурнăçа кĕртсе политикăпа идейлăх йенчен тата тепĕр пусăма çÿлĕрех хăпарнине кăтартрĕç. Парти организацисем коммунистсен политикăлă сыхăлăхне вăйлатса троцкиссене, бухаринцăсене, буржуалă - националиссене т. ыт. пур йышши тăшмансене хирĕç кĕрешсе çирĕпленчĕç. Пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсем парти организацисен политикăлă ĕçе вăйлатнине, вĕсем массăпа тачăрах çыхăнса ĕçлеме пуçланине, хăйсем умĕнче тăракан политикăлă-хуçалăхлă ыйтусене ăнăçлăн пурнăçлама пултарнине кăтартрĕç. Пухусем питĕ пысăк активлăхпа иртрĕç.

Партком йе парторг отчочĕ тăрăх прениpe тухса калакан коммунистсем пуçламăш парторганизаци ĕçĕсем çинче çеç чарăнса тăмаççĕ. Вĕсем пуçламăш парторганизаци ĕçне критиклениpe, унăн ĕçĕнчи ситменлĕхсене палăртса вĕсене пĕтермели майсене кăтартса пайне пĕрлех, райком, хула комитет ĕçĕсем çинче чарăнса тăраççĕ, вĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене пĕтермели майсене кăтартса параççĕ. Çакă вăл парти массисем политикăпа идейă йенчен ÿснине, вĕсем хăйсен руководительсенчен лайăхрах ĕçлеме ыйтнине тата коммунистсен бољшевикла сыхăлăхĕ хăпарнине кăтартат.

Пуçламăш парторганизаци отчочĕ тăрăх тухса калакан йулташсем парторганизацисен партире тăман массăпа çыхăнса тăрассине тата ытларах вăйлатма кирлине кăтартса параççĕ. Партире тăман массă хушшинче ĕçлесси çаплах кирлĕ вырăнта тăмаст-ха. Парти резервни пулса тăракан сочувствуйушчисем, комсомол организацисем, партире тăман актив хушшинче ĕç çителĕксĕр. Çакăн пирки те парторганизаци ÿсĕмĕ йерипен пырат. Çавăн пекех парторганизацисем йенчен массăлă обшчĕствăлă организацисене, уйрăмăнах — профсойуз, осоавиахим организацисене йертсе пырасси начар тăрат.

Чылай пуçламăш парторганизаци пухăвĕсенче тăшмансен сăтăрла сийенлĕхĕсен йулашкисене пĕтерес ыйтăва кирлĕ пек çивĕччĕн кăларса тăратманни те пысăк ситменлĕх. Тÿррех калас пулат, хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем, Парти Тĕпкомĕн йанварти пленум решенисене тĕрĕс ăнланман. Вĕсен шучĕпе халĕ ĕнтĕ тăшмансене йалтах çĕмĕрсе пĕтернĕ, çавăнпа та вĕсемпе текех кĕрешме кирлĕ мар, пĕтĕм задач тунă йăнăшсене тÿрлетесси анчах. Кун пек ăнланни тĕрĕс мар. Тăшмансемпе кĕрешессине вăйсăрлатмала мар, пушшех вăйлатмала, вĕсене социализм строительствин пур участокĕсенче те пĕр çын хăвармисăр тупса палăртса пĕтермеле.

Нумай пуçламăш парторганизацисем çаплах партилĕ-политикăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пыма вĕренсе çитеймен. Çавăн пирки те политикăлă-хуçалăхлă задачсене пурнăçласси чылай ĕçсен йенĕпе кайа йулса пырат. Чылай пуçламăш организаци пухăвĕсенче çак ыйтусем çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмасăр иртсе кайнă. Строительствă ĕçĕсем кайа йулса пыни, аш-какай, сĕт-çу, вăрман хатĕрлевĕ, укça-тенкĕ пухас ĕçсем начар тăни çакăн çинчен калаççĕ те. Çавăн пекех, Ишлей, Туканкас районĕсенчи пуçламăш парторганизаци пухăвĕсенче çуракине лайăх хатĕрленсе организацилĕ иртерес ыйтăва çивĕччĕн тăратнă пулсан, вăл районсенче çураки ĕçĕ халĕхи пек кайа йулни пулмасан пулĕччĕ.

Паллах, парторганизацисен районсенчи пухăвĕсем çак ыйтусем патĕнчен иртсе кайма пултараймаççĕ. Çак ыйтусем вĕсем райкомсен отчочĕсенче те, прениsенче те, пуху решенисенче те тĕп вырăнта тăмала.

Çапла ĕнтĕ парторганизацисен районсенчи отчотпа суйлав пухăвĕсем умĕнче пысăк задачсем тăраççĕ. Тăшмансемпе вĕсен сăтăрла сийенлĕхĕн йулашкисене пĕтĕмпех пĕтерме пĕтĕм массăна мобилизацилемеле.

Партилĕ-политикăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пымала. Парти организацисем хуçалăх ĕçĕсене хăйсен йертсе пымаллине çураки ĕçĕнче аван курса ăнланчĕç. Уйрăм райкомсем, вăл шутран Шупашкар райкомĕ те, мĕн çуракине тухаччен, çуракине хатĕрленсе иртерес ĕçе пĕтĕмпех МТС-пе райçĕрĕç пайне шанса панă. Анчах вĕсем МТС-пе, райçĕрĕç пайĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăман. Шанасси пе шанмала та, анчах мĕнле ĕçленине тĕрĕсле, йертсе пымала.

Коммунистсене бољшевисăмпа, Маркс, Енгељс, Ленин, Сталин вĕрентĕвĕсемпе хĕçпăшаллантарас, коммунистсен политикăлă сыхăлăхне вăйлатас, критикăпа самокритикăна тата анлăрах, хăйулăрах сарса пырас задачсем парторганизацисем умĕнче йалан тĕп вырăнта тăмала.

Çавăн пекех районсенчи парторганизацисен пухăвĕсен ĕçĕнче партире тăман актив, сочувствуйушчисем, комсомол, хĕрарăмсем хушшинче ĕçлес ыйтусем палла вырăн йышăнмала.

Йулашки вăхăтра партипе совет, комсомол, профсойуз тата ытти организацисенче айалтан пуçласа çÿле çитиччен руководствăна çĕнĕ çынсем пычĕç. Вĕсем ĕçре тĕрĕсленнĕ, Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеме пултарнине кăтартнă çынсем. Вĕсене парти организацисем йенчен куллен пулăшса пыни кирлĕ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ССРС Верховнăй Совет суйлавĕнчен те лайăхрах, организацилĕрех иртермеле тăвасси, совет государствин аслă оргăнĕсене рабочисем, хресченсем, интеллигенци хушшинчи чи лайăх çынсене, тăван çĕршывăн хĕрÿлĕ патриочĕсене суйламала тăвасси парторганизацисем çине уйрăмах пысăк ответлăх хурат. Парти организацисен кашни суйлавçăна политикăлă агитаципе çавăрса илмеле тăвас пулат.

Парторганизацисен районсенчи пухăвĕсемпе конференцисем вăйлă критикăпа самокритикă никĕсĕ çинче, партин шалти демократине çирĕппĕн пăхăнса пынипе иртмеле. Çак никĕс çинче пирĕн партин районсенчи йертсе пыракан оргăнĕсене чи шанчăклă, çителĕклĕ тĕрĕсленнĕ, Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе хăйаррăн кĕрешме пултаракан, парти ĕçне вĕçне çитиех сыхласа тăма пултаракан бољшевиксене суйласа хăвармала.

Тбилиси хулинчи Ленински 1-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама

ИОСИФ ВИССАРИОНĂВИЧ СТАЛИН

йулташ кандидатурине регистрациленĕ

Тбилиси хулинчи Ленински 1-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Иосиф Виссарионăвич Сталин

йулташа регистрацилесси çинчен йышăннă

постановлени

Округри суйлав комиççине Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, округри суйлав комиççи çав кандидатурăсем çинчен тăратнă документсем „Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48,49,50,51,52 тата 53-ш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшÿллĕ пулнине палăртса, çапла йышăнат:

„Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 52-мĕш статйи тăрăх, Тбилиси хулинчи Ленински 1-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама баллотировкăна тăма Кирăв йăчĕпе тăракан саватри, автомашинăсем йусакан саватри, трикотаж комбинат строительствинчи 7-мĕш №-лĕ çĕвĕ хапракĕнчи, „Реммаштрест" саватĕнчи, бетон саватĕнчи, мрамар саватĕнчи, кирпĕч саватĕнчи, целлулоид хапракĕнчи, закройнăй хапракĕнчи рабочисен, служăшчисен тата инженерсемпе техникла работниксен пĕрлехи пухăвĕсем, 37-мĕш тата 51-мĕш №-лĕ вăтам шкулсенчи вĕренекенсемпе преподавательсен тата служăшчисен пĕрлехи пухăвĕсем (çав пухусенче 4 000 çын пулнă) Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Иосиф Виссарионăвич Сталин—1879 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, ПСК(б)П Тĕпкомĕн Генераљнăй секретарĕ, Мускавра—Кремљре пурăнат—кандидатурине регистрацилес.

„Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 57-мĕш статйи тăрăх, Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа Тбилиси хулинчи Ленински 1-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

„Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Ленински Суйлав Округĕн Округри Суйлав Комиççин Председателĕ
Н. ОРДЖОНИКИДЗЕ.

Председателĕн заместителĕ
Л. ЛЕБЕШЁВ.

Секретарĕ
П. АВСАДЖАНИШВИЛИ.

Комиççи членĕсем:
А. ПРУИДЗЕ,
А. КАНДЕЛАКИ,
М. ЕДИЛАШВИЛИ,
К. ЦУЛАЙА,
Г. АЛИБЕГАШВИЛИ.

1938 çулхи майăн 11-мĕш.
Тбилиси хули.

Тбилиси хулинчи Сталински 8-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама

ВЙАЧЕСЛАВ МИХАЙЛĂВИЧ МОЛĂТĂВ

йулташ кандидатурине регистрациленĕ

Тбилиси хулинчи Сталински 8-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлама кандидата

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв

йулташа регистрацилесси çинчен йышăннă

постановлени

Округри суйлав комиççи Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, округри суйлав комиççи çав кандидатурасем çинчен тăратнă документсем „Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50, 51. 52 тата 53-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшÿлĕн пулнине палăртса, çапла йышăнат:

„Грузин ССР Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 52-мĕш статйи тăрăх, Тбилиси хулинчи Сталински 8 мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйланма баллотировкăна тăма „Коммунис" типографинчи, Тбилисири чукунçул транспăрт инженерĕсене хатĕрлекен институтри, фармакохими савăтĕнчи, ăша йенчи чирсемпе кĕрешме вĕрентекен институтри, меднопрокатнăй савăтĕнчи, грузинсен С. М. Кирăв йăчĕпе тăракан индустри институтĕнчи, стоматологи институтĕнчи рабочисен, служăшчисен, инженерсемпе техникла работниксен, студентсемпе преподавательсен пĕрлехи пухăвĕсем (çав пухусенче 3.042 çын пулнă) Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв—1890 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ, Мускавра пурăнат — кандидатурине регистрацилес.

„Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 57-мĕш статйи тăрăх, В. М. Молăтăв йулташ кандидатурине Тбилиси хулинчи Сталински 8-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

„Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйипе килĕшÿлĕн çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округри Суйлав Комиççин Председателĕ
Г. КИКАЧЕЙШВИЛИ.

Председателĕн заместителĕ
Р. АБАШИДЗЕ.

Çекретарĕ С. ГАГНИДЗЕ.

Комиççи членĕсем:
ПИРЦХАЛАЙШВИЛИ,
ШАМБЕ,
НАЦВЛИШВИЛИ,
МАЙСУРАДЗЕ,
АКОПĂВĂ,
ДЖАБАДАРИ.

1938 çулхи майăн 11-мĕш.
Тбилиси хули.

Тбилисири 300 пин çынлă митинг

Майăн 13-мĕшĕнче предприйатисенче кăнтăрлахи çменасенче ĕçлесе тухнă хыççăн, хулан пур кĕтесĕсенчен те хула варрине демонстрантсен колоннисем пухăнма пуçланă.

Тбилисири 300 пин ĕççынни Кавказ лешйен федерацийĕн площадĕнче тата унта тухакан урамсене вырнаçса тăнă.

Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕ йăчĕпе пухăннă митинг—демонстрацине Тбилиси хула совечĕн председателĕн ĕçĕсене туса пыракан Гвишиани йулташ уçнă.

Тбилиси ĕççыннисене, — тенĕ вăл,—пысăк чыс тиврĕ. Сталин тата Молăтăв йулташсем Тбилиси хулинчи суйлав округĕсенче баллотировкăна тăма килĕшÿ пани çинчен пĕлтерчĕç.

Тбилиси ĕççыннийĕсем, вĕсем çине пысăк кăмăлпа пăхнипе савăнăçлă тата телейлĕ ĕççыннисем, Ленин—Сталин партийĕн никам çĕнтерейми йалавне татах та çÿлерех çĕклеме, хăйсен речĕсене коммунисемпе партире тăманнисен никам çĕмĕрейми блоке тавра татах та таччăнрах пĕтĕçме пулаççĕ.

Митингра Сталин йăчĕпе тăракан пăравуссемпе вакунсем йусакан саватри слесăр Девсурашвили йулташ, ăна Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата тăратнă, Тбилисири университетри Харадзе професссăр, 101-мĕш №-лĕ шкулта вĕренекен пионеркă Скандерăвă, студент Швелидзе, килхуçи хĕрарăмĕ Миалковскайа йулташсем тухса сăмах каланă.

Вĕсен сăмахĕсем аслă Сталина тата унăн чи çывăх соратникне Молăтăв йулташа хĕрÿлĕн йуратнипе тулли пулнă.

Грузи К(б)П Тĕпкомĕн çекретарĕ Берийа йулташ уçă та пысăк сăмах тухса каланă.

Вăл Грузири телейлĕ халăхăн Сталин тата унăн шанчăклă соратникĕ Молăтăв йулташ Тбилиси хулинчи суйлав округĕсенче баллотировкăна тăма килĕшÿ пана хыпăра илнипе пулнă питĕ пысăк хавасланăх çинчен каласа панă.

300 пин çынлă митинг Сталинпа Молăтăв йулташсем патне саламлă телеграмма йанă.

(ТАСС).

Мотыклей бухтинчи суйлав участки

ХАБАРĂВСК, майăн 13-мĕш, (ТАСС). Кунтук йалсоветĕнчи (Колымă) суйлавçăсем пăлан кĕтÿвĕсемпе тайгана тухса кайас умĕн хăйсен чи лайăх представителĕсене участкăри суйлав комиççине уйарнă.

Суйлав участки Мотыклей бухтинче пулат. Кунта ийунĕн 26-мĕшĕнче—РСФСР Верховнăй Советне суйламали кун Кунтук йалсоветĕнчи мĕн пур суйлавçăсем пухăнаççĕ. Нацилĕ поçолăксенче—Гадлере, Тасканре т. ыт. çĕрте те РСФСР Конституципе суйлав саккунне вĕренессине организациленĕ. Кружоксене комсомолĕçсемпе учительсем йертсе пыраççĕ. Кружоксенче вĕренекенсем пысăк активлăхпа вĕренеççĕ, нумай ыйтусем параççĕ.

СОВЕТ СОЙУЗĔ ТĂРĂХ

Саљски çеçен хирĕсенче тата Дон-çи Ростов облаçĕнчи чылай районсенче кăçал ыраш калчи ытти çулхисенчен 15 кун малтан шăркана ларнă. Ыраш çÿллĕшĕ 75 сантиметра çитет. Йатарласа тунă бригадасем ыраш калчисем çинчи çумкурăкĕсене çумлама пуçланă.

— Смоленск облаçĕнче ир акнă йĕтĕнсем пур çĕрте те лайăх шăтса тухнă. Йĕтĕн калчисем лайăх пĕр пек ÿсеççĕ. Духавшчински районĕнчи йĕтĕн акса тăвакан звеносем йĕтене акса пĕтерне, йĕтене апат пама хатĕрленеççĕ.

— Иртнĕ çулта искусствă ĕçĕсен комитет системине кĕрекен театрсем 145 пин спектакљ лартса кăтартнă. Вăл спектакљсенче 70 мĕлйун çын пулнă.

(ТАСС).

Лигă наци Совечĕн çеççинче

Лигă наци Совечĕн майăн 12-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Абиççини ыйтăвĕ тăрăх пренисем пынă. Румыни, Пољшă, Швеци, Бељги, Перу, Екватор тата Латви представителĕсем Англи правителствин Итали тĕлĕшпе панă сĕнÿпе килĕшнĕ. Англи правителствин сĕнĕвĕ çапла: кашни правителствăн хăйĕн Италипе иккĕшин хушшинчи çыхăнăва ирĕклĕн йĕркелемеле, хăйне мĕнле тусан лайăх, çавăн пек йĕркелесе пымала.

Китайпа Новайа Зеланди делегачĕсем Англи сĕнĕвне хирĕç хыттăнах тухса каланă.

Абиççини ыйтăвĕ тăрăх йатарласа решени йышăнман. Лару председателĕ Мунтерс (Латвин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ) хăйĕн йулашки сăмахĕнче çапла каланă: Лигă наци пленумĕ çак ыйтăва пĕтĕм ирĕклĕхпе пăхса тухмала тунипех хăварат,—тенĕ.

Лигă нацине çывăх тăракансем каланă тăрăх, Абиççинине Лигă наци членĕсен спискинчен хуратса пăрахмаççĕ.

Майăн 13-мĕшĕнче ирхине Советăн хупă ларăвĕ пулса иртнĕ. Пичет пĕлтернĕ тăрăх, çав ларура Йапони агреççине хирĕç кĕрешес çĕрте Китайа пулăшасси çинчен Китай чĕнсе каланине сÿтсе йавнă.

Майăн 13-мĕшĕнчи каçхи уçă ларупуриншĕн те кĕтмен çĕртен Испани правителствин делегачĕ Аљварес дел Вайо тухса каланипе хупăннă. Аљварес дел Вайо Испани ыйтăвĕ тĕлĕшпе резољуци тăратнă. Çав резољуцире хутшăнмала мар текен политикăна пăрахăçа кăлармаллине ыйтса çырнă. Вăл резољуци тÿрĕмĕнех çав политикăна хирĕç тата ăна хÿтĕлекенсене, чи малтанах Англи правителствине айăплакан акт пулса тăрат.

Лорд Галифакс çак резољуцине хирĕç пулнă. Вăл: ку резољуци унăн правителствин пĕтĕм политикине хирĕç пырат,—тесе каланă.

Литвинăв йулташ: вăл малтан Испани требăванийĕсем майлă пулса калани çак резољуци тĕлĕшпе те çаплах йулат, тесе каланă.

Советăн ытти членĕсем Англи сĕнĕвĕпе уççăнах килĕшес мар тĕлĕшпе хыттăн тăнине пăхмасăрах, лару председателĕ Мунтерс прениsене чарса лартма хăтланнă, вăл резољуцине сасăлама тăратман. Аљварес дел Вайо резољуцине сасăлатарасшăн тăнă, вăл: çав резољуцине пăхса тухассинчен пăрăнни Лигă наци Совечĕн авторитетне çĕклемест,—тесе каланă. Çакăн хыççăн тин вара Мунтерс çапла каланă: малашнехи ларусенче Испани ыйтăвĕ пулат,—тенĕ. Çакăнпа лару хупăннă.

Кун хыççăн, кану вăхăтĕнче Советăн хупă ларăвĕ пулса иртнĕ. Испани представителĕ сĕннипе резољуцине сасăланă. Резољуци майлă пулса икĕ государствă сасăланă—Испани тата ССР Сойузĕ. Резољуцине хирĕç çаксем сасăланă: Англи, Франци, Пољшă тата Румыни. Тăхăр государствă хирĕç те тата майлă та сасăламан.

(ТАСС).

Тинĕссенчи тата йухан шывсенчи флотăн РСФСР Верховнăй Советне суйламали кун ишевре пулакан суднисемпе пăрахучĕсем çинчи суйлавçăсем РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавне хутшăнасси çинчен

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă постановлени

Йухан шывсенчи тата тинĕссенчи флотăн РСФСР Верховнăй Советне суйламали кун ишевре пулакан суднисем çинчи суйлавçăсене пурне те суйлава хутшăнтармала тума, Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнат:

1. Тинĕсри тата йухан шывсенчи флотăн РСФСР Верховнăй Советне суйламали кун ишевре пулакан суднисем тата пăрахучĕсем çинчĕ, 15 суйлавçăран сахал мар пулсан, суйлав участки тума ирĕк парас, унта виçĕ çын йышпа—председательĕ, çекретар тата комиççи членĕ—участкăри суйлав комиççине тумала.

2. Суйлавçăсем 15 çынран сахал суднăсемпе пăрахутсем çинче суйлав кунĕ çав суднăсем çине участкăри суйлав комиççи членĕсем йе участкăри суйлав комиççи представителĕсем пырса суйлав бюллетенĕсене илеççĕ.

3. Вырăнçенчи советсене тата ĕçтăвкомсене пур пристаньсем çинче те суйлав участкисене тума тата суйлав комиççисен составне „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 41-мĕшпе 42-мĕш статйисемпе килĕшÿлĕн çирĕплетме ирĕк парас.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
М. Калинин.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕшĕн—Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн членĕ
А. Артухинă.

Мускав, Кремĕл
1938 çулхи майăн 13-мĕшĕ.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Йулашки темиçе кун хушшинче Вăтам фронтра Таңцзиң—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр сектăрĕнче пулнă çапăçусенче Йапони салтакĕсем 1 000 çын ытла вилнĕ.

Китай партизанĕсем активлăн вăрçаççĕ. Майăн 11-мĕшĕнче партизансем Наңхуей (Шанхайран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) патĕнче Йапони отрйачĕ çине тапăннă та ăна йалтах пĕтерсе тăкнă.

Китай авиацийĕ Мынчнрен кăнтăрпа хĕвеланăç йеннеле Йапони çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Йапони салтакĕсем нумай вилнĕ тата 20 танка йахĕн йалтах пĕтерсе тăкнă. Майăн 12-мĕшĕнче Китай çарĕсем, калама çук хыттăн вăрçнă хыççăн, йапонĕçсенчен Мынчене туртса илнĕ.

Çурçĕр Китайра Шаңдун провинцинче йапонĕçсем Цзинанрен Кăнтăр йеннеле наступлени туса пыраççĕ. Çавăн пекех йапонĕçсем Йуңчен патĕнче те наступлени туса пыраççĕ. Майăн 12-мĕшĕнче Китай çарĕсем, Йапони артиллерийĕ пĕр майах хыттăн персе тăнă пирки, Йуңчен хулинчен тухса кайнă. Китай çарĕсен çĕнĕ линийĕ Дункоупзинче (Цзинанрен хĕвеланăçнеле, тата Йуңчен çурçĕрелле).

Шаңдун провинцин кăнтăр пайĕнче вăрçă ĕçĕсем лăпланнă.

Шанçи провинцин çурçĕр пайĕнче Йапонипе Моңголи çарĕсенчен 1.200 салтак китайĕçсем йеннелле тарса каçнă.

Кăнтăр Китайра Йапони çарĕсем халĕ те наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем Амой утравне йалтах тытса илнĕ. Çакăн хыççăн Китай çыннисем пурĕ 50 пин çын йут çĕршыв çыннисем пурăнакан территорине тарса пынă. Йулашки хыпарсем тăрăх, Китай çарĕсем Амойра çухатнă позицисене кайала туртса илнĕ. Йапонĕçсем Цзйантоу патнеле (Амойран çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) кайала чакнă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐÇӖ

Партин пуçламӗш организацисенчи суйлавсен итогӗсем

(Турхан районӗ)

Районри организацири 51 коммунисран отчотпа суйлав пухӑвӗсене 46 коммунис хутшӑннӑ, 2 çын командировкӑра, 2 çын чирлӗ пирки пухура пулайман. Пухусенче пурӗ 27 çын тухса каласнӑ. Ку çитӗ коммуниссем суйлав пухӑвӗсене активлӑн хутшӑннине пӗлтерет. Çав хушӑрах хӑшпӗр пуçламӗш парторганизацичи коммуниссем пухусенче активлӑн хутшӑнманни те палӑрнӑ. Райӗçтӑвком çумӗнчи организацинче 3 çын çеç тухса каласнӑ. Çакӑн пекех Шалти Ӗçсен Халӑх Комиссариачӗн Турхан районӗнчи уйрӑмӗнчи пуçламӗш парторганизацинче тата вӑрман хуçалӑхӗ çумӗнчи организацинче те пухусем активлӑ иртмен.

Тухса каласакансенчен нумайӑшӗ ПСК(б)П райкомӗн ӗçӗнчи çитменлӗхсене палӑртрӗç.

Воробьёва йулташ:—ПСК(б)П райкомӗн 4 пропагандис пур, анчах парти историне вӗрентес ӗçе çуркунне тин организациленӗ, вӑл пит пысӑк çитменлӗх пулса тӑрать, терӗ.

Парти членӗ Орлов ПСК(б)П райкомӗнче ӗçлекен инструкторсем пуçламӗш организацисене çителӗклӗ пулӑшу паманнине кӑтартса пачӗ. Парти кандидачӗ Андриянӑв та парти райкомӗ коммуниссене ӗçре çителӗклӗ пулӑшса паманни çинчен каларӗ.

Парти членӗ Федярӑв:—Пуçламӗш парторганизацисенчи хӑшпӗр коммуниссем нумай чухне вӑхӑтра ахаль иртерессӗ. Çавӑн пек йулташсене парти райкомӗ йӗнчен нимӗнле пулӑшу та пулман. Хатӗрлев ӗçӗнче çитменлӗхсем нылай, унта ӗçлекен коммуниссем çак çитменлӗхсене пӗтерме тӑрӑшман. Çакна парти райкомӗ астуман, терӗ.

Парти членӗ Ларионов йулташ пуçламӗш организацисем те, ПСК(б)П Парти райкомӗ те комсомол организацийе тата профсоюзсен организацийӗсене ӗçлеменнине вӗсене çителӗклӗ пулӑшу паманнине критиклерӗ.

Пухусенче тухса каланӑ коммуниссем нумайӗшӗ те парти райкомӗн хӑйӗн постановленисене мӗнле пурнӑçланине тӗрӗслесе тӑманнине кӑтартрӗç. Парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе те парти райкомӗ йапӑх ӗçленӗ.

Çав хушӑрах хӑшпӗр коммуниссем парторгсен отчочӗсене итлени хыççӑн, ПСК(б)П райкомӗн критикленипех иртерсе йанӑ, хӑйсен ӗçӗнчи çитменлӗхсене палӑртман. Ку ӗнтӗ çав парторганизацисене критикӑ çуккине пӗлтерет. Çитменлӗхсем вӗсен сахал мар. Парти ретне ӳстерессине ӗçлемеççӗ. Çапла вӑрман хуçалӑхӗ çумӗнчи пуçламӗш организацисене пӗр çынна та парти ретне çӗнӗрен илмен. Çапах та хӑйсен отчотлӑ пухӑвӗн решенинче ку çитменлӗхе кӑтартса хӑварман.

Районра 7 пуçламӗш парторганизацинче суйлав иртернӗ. Малтан ӗçленӗ парторгсене виççӗшне суйланӑ, çӗнӗрен тӑватӑ суйланӑ.

В. Петров.

Ӗçре тӗрӗсленнӗ йулташсене суйларӗç

Хӗрлӗ Чутай районӗнче партин пуçламӗш организацийӗсенче парторгсене суйланӑ чухне, ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗ кӑçалхи мартӑн 29-мӗшӗнче партин йӗртсе пыракан органӗсен суйлавӗ çинчен йышӑннӑ решенийе çирӗппӗн пӑхӑнса пычӗç.

Апрелӗн малтанхи кунӗсенчен пуçласа пуçламӗш организацисенче тата пӗччен коммуниссемпе пухусем туса иртернӗ. Кун хыççӑн, парторгсемпе вӗсен заместителӗсене пухса совешчани иртернӗ. Çак пухусенче парти райкомӗ отчот туса панӑ.

Каласа хӑвармала, отчотпа суйлав пухӑвӗсем идейӑлӑ-политикӑлӑ пысӑк çӳлӗшре иртрӗç. Большевикла критикӑпа самокритикӑна коммуниссем анлӑн сарса, парти организацисен тата райкомӑн çитменлӗхӗсене хытӑ тишкӗрчӗç. Тухса калаçакансем те нумай пулчӗç. Районра 69 коммунисран 67 коммунис пухусенче пулнӑ, вӗсенчен 62 коммунис тухса калаçрӗç.

Парти райкомӗн отчочӗ тӑрӑх тухса калаçакансем парти райкомӗ партилӗ-политикӑлӑ ӗçе хуçалӑхла ӗçсемпе çыхӑнтарса пыман пирки хытӑ критиклерӗç. Парти райкомӗ пуçламӗш организацисене те çителӗклӗ пулӑшу паман. Çавӑн пекех, хӑшпӗр парторгсен çитменлӗхӗсене тишкӗрнипе пӗрлех, парти райкомӗн пӗрремӗш çекретарӗ коммуниссене хӑшпӗр чухне ытлашши шанӑççӑра хунӑ тесе тата хӑшпӗр ыйтусене тӗплӗн пӗлмесӗр васкавлӑн татса панӑ тесе критиклерӗç.

Партин пуçламӗш организацийӗсенче парторгсене коммуниссем парти организацин йышне ӳстерес, коммуниссемпе ӗçлес тата партире тӑман сарлака массӑсем хушшинче куллен политикӑлӑ-массӑлӑ ӗçе туса пыма татӑклӑн кӑтартса хӑварчӗç.

Суйлав пухӑвӗсем активлӑн иртни большевикла критикӑпа самокритикӑна анлӑн сарса йани партин йӗртсе пыракан органӗсене ӗçре, тӗрӗсленӗ, парти ӗçне чӗререн йуратса тата парӑнса ӗçлекенсене суйлама пулӑшрӗ.

Районра виçӗ парторга çӗнӗрен суйланӑ.

Суйлав пухӑвӗсенче кӑтартса хӑварнӑ çитменлӗхсене йалан асра тытса, парторгсен хӑйсен ӗçӗсенче çак кӑтартусене пурнӑçласа пымала.

ПСК(б)П Хӗрлӗ Чутай райком çекретарӗ Толстов.

Самрӑк коммуниссене ӗçре пулӑшса пымала

ПСК(б)Партине çӗнӗ членсем илессине çӗнӗрен пуçарса йанӑранпа Шупашкар районӗнчи парторганизацинче 8 çынна партине илнӗ, 6 çынна кандидатран парти членне куçарнӑ. Çамрӑк коммуниссене парти вӗрентӗвне хутшантарнӑ. 9 коммунис парти историне, 4 коммунис каçхи шкулсенче вӗренеççӗ, пӗри заочник. Ку коммуниссене парти ӗçне хутшӑнтарас ӗçре çитменлӗхсем чылайах. 14 коммунисран 11-шне парти порученисем панӑ. 3 коммуниса парти ӗçне хутшӑнтарман. Çав вӑхӑтрах хӑшпӗр коммуниссене, Шулдйаков (райӗçтӑвком çекретарӗ), Шиманӑв (райхаçат çекретарӗ) йулташсене парти порученисене ытлашшипех парса тултарнӑ.

— Райӗçтӑвком çумӗнчи пуçламӗш парторганизаци мана хаçат-журналсем сарма хушнӑ. Ку ӗçе нимпе те тӑваймастӑп, вӑхӑт çитмест. Акӑ, епӗ государствӑ учрежденисенчи работникӗсен союзӗн райкомӗн председателӗ пулса ӗçлетӗп. Çав вӑхӑтрах райӗçтӑвкомӑн административлӑ комиççин çекретарӗ, тата участкӑри суйлав комиççи çекретарӗ. Ку ӗççене пурне те вӑхӑтра туса пымала. Çавӑнпа та хӑш чухне парти историн кружокне вӗренме те каймастӑп, тет Шулдйаков йулташ.

Çав вӑхӑтрах П. Трофимӑв (финанс пайӗн инспекторӗ) парти кандидачӗн нимле парти поручени те çук. Трофимӑв йулташ начар ӗçлет темеле мар. Вӑл парти историне вӗренет, занятисене пӗр сиктермесӗр çӳрет. Вӑл хӑйӗн ӗçне те ытти инспекторсен ӗçӗсемпе танлаштарсан, лайӑхрах туса пырать. 1937 çулхи государствӑ дохочӗн планне вӑл 114 проц. тултарнӑ, 1938 çулхи пӗрремӗш квартӑл планне 128 проц.. Паллах, çакӑн хыççӑн Трофимӑв йулташа парти ӗçне хутшӑнтарманни тӗрӗс мар.

Парти райкомӗн ӗçӗнче уйрӑмах сочувствуйушчисемпе ӗçлесси кайри вырӑнта тӑрать. Районра пӗтӗмпе 25 сочувствуйушчи. Вӑл шутран чылайӗшне иртнӗ çулсенче сочувствуйушчисен ретне илнӗ. Сӑмахран, 1935 çулта—11, 1936 çулта—6, 1937 çулта 1 çынна, ыттисене 1938 çулта сочувствуйушчисен ретне илнӗ. Партин чылай пуçламӗш организацисем партире тӑман активран сочувствуйушчисен ретне илес тӗлӗшпе пачах ӗçлемеççӗ. Парти райкомӗ те сочувствуйушчисемпе ӗçлессине вӑйсӑрлатнӑ.

Ковалевский йулташ 1936 çултанпа сочувствуйушчисен ретӗнче тӑрать. Кӳкеçре йалпо председателӗ пулса ӗçлет. Нимле общественнӑ ӗçе те хутшӑнмасть. Парторганизаци те ӑна парти порученисем парса парти ӗçне хутшӑнтарма шутламан. Ковалевский йулташа парти историне вӗрентекен кружок çумне çирӗплетнӗ. Вӑл пӗр занятинче çеç пулнӑ.

А.Г. Григорйӗва йулташа (халӑх сучӗпе прокуратурӑра уборщица пулса ӗçлет) парти членӗнчен сочувствуйушчине куçарнӑ та, ун çинчен мансах кайнӑ. Вӑл милици çумӗнчи парторганизацинче учотра тӑрать, анчах парторг камне пӗлмест. Мӗншӗн тесен, парторганизаци унпа ӗçлеме пӑрахнӑ. Ӑна парти порученисем пама мар, партин уçӑ пухӑвӗсене те чӗнмеççӗ. Вӑл нимле кружокра та вӗренмест. Григорйӗва йулташ çырма, вулама пултарать. Ӑна пулӑшни кӑна кирлӗ. Анчах çак ӗçе тумаççӗ. Хатӗрлев комитетӗнче ӗçлекен сочувствуйушчине Михайлӑва та çавӑн пекех парти ӗçне хутшӑнтарман. Михайлӑв йулташ начар ӗçлемест, парти кружокӗсене те тӑрӑшса çӳрет. Кун пек фактсене темиçех кӑтартма пулать.

Çамрӑк коммуниссем райком отчочӗ тӑрӑх чылайӗшӗ тухса каланӑ. Вӗсем райкома çак çитменлӗхсемшӗн хытӑ критикленӗ.

П. Перлов.

СВЕТЯТ ЗВЕЗДЫ ЛУЧИСТО НА КРЕМЛЕ.

НЕ ШАГАТЬ ФАШИСТАМ ПО СОВЕТСКОЙ ЗЕМЛЕ!

УКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Б. Пророкӑв художникӑн ИЗОГИЗ кӑларнӑ çӗнӗ плакачӗ. Сӑмахӗсем Н. Черемныхӑн.

(Союзфото).

Ӗçе вӑрахлатмала мар

Кӑçалхи çуркунне, пӑрсем кайнӑ вӑхӑтра, çанталӑк йапӑхрах тӑчӗ пулин те (сивӗ çил, шӑн) республикӑри вӑрман йухтарас ӗçре ӗçлекенсем чылай пысӑк ӗçсем турӗç. Пур шывсем тӑрӑх та малтан йухтарма панӑ заданийе вӑхӑтра пурнӑçланӑ. Шывсем хӗррипе пӗр кубла метр вутӑ та выртса йулман, пурне те шыва йарса вырӑнсене çитернӗ. Пӗтӗмпе кӑçал шывсем тӑрӑх 91,4 пин фесметр йухтарнӑ, вӑл шутран 10 пин фесметр Лудӑ шывӗ тӑрӑх, ыттисене Шурӑ Бездна тӑрӑх йухтарнӑ.

Çаксене пӗтӗмпех вӑрман йухтарас ӗçри стахановецсем, пӗтӗм рабочисем тӑрӑшнипе тунӑ. Вӗсем хӑйсем хушшинче социалисӑмла ӑмӑртӑва нихӑçанхинчен ытла сарса йарса, паха тӗслӗхсем кӑтартрӗç. Шӑмӑршӑ вӑрманпромхозӗнчи Зариф Сабирӑв йулташ йӗртсе пыракан грузчиксен бригади (бригадӑра 15 çын) йӑвӑççене шыва йарассипе кулленхи нормӑна 540 процент таран тултарса ӗçленӗ. Çав вӑрманпромхозри Замйал Фенскантӑв йулташ бригади (бригадӑра 19 çын) плана йалапах 345 процент тултарса пынӑ. Прохӑр Вйалдин йулташ (Улатӑр вӑрманпромхозӗнчи тысачник) йӑвӑç пушатассипе кашни кунхи нормӑна вӑтам шутпа 351 процент пурнӑçласа пынӑ. Хабир Алимӑв, А. Малйамӑв т. ыт. йулташсен бригадисем те хӑйсен дисциплинине çирӗплетнӗ, пур ӗçе те вӑхӑтра пурнӑçласа пынӑ. М. Дмитрийӗв йулташ бригади, А. Храмӑв тата ытти рабочисем тӑрӑшса ӗçлерӗç.

Йалсоветсенчен уйрӑмӑнах Осанӑвӑ йалсоветне (Шӑмӑршӑ р.) палӑртмала. Йалсовет пӗтӗм ӗçе хӑй организацилесе, пуçарса пычӗ. Вӑл уйрӑмӑнах ӗç вӑйне парассинче пысӑк çитӗнӳ тунӑ. Унӑн план тӑрӑх 85 çын йамала пулнӑ, 130 çын ӗçлеме йанӑ. Йалсовет хӑй çине илнӗ обйазательствӑна ытлашшипех пурнӑçларӗ.

Вӑрман йухтарас ӗçре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса ӗçленӗ бригадӑсемпе йалсоветсем, колхозсем татах та пур. Анчах вӗсен ончӗ халӑхи вӑхӑтра çителӗксӗр сарӑлса пырать. Уйрӑмӑнах йухса аннӑ йӑвӑççене шывран кӑларасси çителӗксӗр пырать, пӗтӗмпе 7045 кубла метр кӑна кӑларнӑ, мӗншӗн тесен, ӗç вӑйӗ çителӗксӗр. Уйрӑм колхозсемпе йалсоветсем, уйрӑмӑнах вӑрман хуçалӑхӗсем малтан тунӑ çитӗнӳсемпе лӑпланма пӑхаççӗ, ӗç вӑйӗ памаççӗ. Улатӑр районӗнчи колхозсем („Победа Октября" т. ыт. те) договорта кӑтартнисене пӑсса пыраççӗ.

Шывран кӑларнӑ вутӑсене вырӑнсене турттарса кайас ӗç те начар пырать. Сӑрӑ шывӗ хӗрринче выртакан йӑвӑççенчен вӑрман савӑчӗсем пӗтӗмпе те 479 кубла метр çеç турттарса кайнӑ. Лудӑ шывӗ хӗрринчи вутӑсене Алтӑшри савӑт ку таранччен те пӗр кубла метр турттарса кайман. Çавна пула йухтарас ӗçре ӗçлекенсен час-часах простойсем пулаççӗ.

Малашне ӗçе лайӑхлатмала. Вӑрман йухтарас тӗлӗшпе ӗçлекен организацисен чӑн малтанах ӗç вӑйне тупса, ӑна тӗрӗс организацилемеле. Рабочисене ӗçлеме пур условисем те туса памала.

Совет писателӗсем мӗн çыраççӗ

Манӑн çӗнӗ пйесӑсем

Çак кунсенче епӗ Мускаври Йевг. Вахтангӑв йачӗпе тӑракан театӑра Кубанри колхозсен пурнӑçне кӑтартса çырнӑ „Джиоконда" йатлӑ пйесӑ патӑм.

Ӗç колхозри кану çуртӗнче, малта пыракан çынсем—çӗрӗç ӑстаçисем, ударниксем, Кремӗлти канашлусенче пулнӑ çынсем пухӑннӑ çӗрте, пулса иртет. Кунта, ман шухӑшпа, хӑйсен ӗмӗрӗнче пуçласа кану çуртӗнче пулакан çынсен хушшинчи çӗнӗ, тӗлӗнмеле хутшӑнусем пулса кайаççӗ.

Пйесӑн стилӗ—комедилӗ. Комеди пулайчӗ-ши,—пӗлместӗп. Çпектакӑле куракан хӑйне канури пек туйса, çпектакӑлте савӑнса канмала тума пултартӑм пулсан, вӑл вара пысӑк çӗнтерӳ пулӗччӗ.

Пйесӑра йаланхи пек „аван" тата „начар" персонажсем çук. Унта пурте „аван", йаланхи совет çыннисем, унсӑр пуçне тата, çӳлте каланӑ пек, малта пыракан, чи лайӑх, йатлӑ çынсем. Вӗсен ним уйӑрмали те çук, вӗсен тӗлӗвӗсем пӗр, пӗр пек ӗмӗт. Тивӗççӗр çынсене хутшӑнтармасӑр сужет тума, персонажсене кирлӗ сценӑлӑ йӗрке тума пулать-и-ха? Ман шутпа, пулать.

Çӗнӗ пйесӑн теми—çынсен телейӗ, вӗçӗмсӗр телей. Манӑн; „Пурӑнма лайӑхрах, пурӑнма савӑнӑçлӑрах пулса тӑчӗ", тени пурнӑçра мӗне пӗлтернине кӑтартса парассӑм килчӗ. Ку пйесӑна Мускавра, 1938 çулхи хӗллехи сезон пуçламӗшӗнче лартаççӗ.

**

Хӗрлӗ Çарӑн тӗп çуртӗ ыйтакан пйесӑ çинче епӗ çулталӑк ытла ӗçлетӗп ӗнтӗ. Ун пирки Инçетри Хӗвелтухӑç чиккине те кайса килтӗм. Епӗ унта курнӑ çынсем, вӗсен ӗççӗсем ман асӑма нихӑçан манми кӗрсе йулчӗç. Материал çав тери пысӑк та анлӑ, епӗ ӑна çпектакӑлӗн шутлӑ, кӗске формине мӗнле кӗртсе вырнаçтарасси çинчен нумай вӑхӑт шухӑшласа çӳрерӗм.

Халӗ пйесӑ йӗркеленчӗ. Вӑхӑт нумай илекен ӗç, чи йӑвӑр ӗç — хатӗрленӳ ӗçӗ вӗçленчӗ. Ӗçе малала тумала. Кӗркунне пуçланнӑ çӗре вӗçлесе пӗтеретӗп те, театӑра паратӑп.

Унӑн тӗп шухӑшне кӗскен каласа пама йӑвӑр, анчах, ӗç тӑрӑх каласан—мана ку пйесӑна çырма пирӗн çынсем—пирӗн чикӗри паттӑр пограничниксем хавхалантарчӗç. Вӗсен халӑхи ӗçӗсем тӑрӑх, пирӗн тӑван çӗршыв çине вӑрçӑлӑ тапӑну вӑхӑтӗнче совет çынни хӑйне мӗнле тытма пултарассине туйса илме йӑвӑр мар. Епӗ хамӑн пйесӑна, унти ӗç пирӗн чикӗре пулса иртекен чӑн-чӑн событисене, пирӗн кунсенчи событисене кӑтартса парать пулсан та, çавӑ малашне пулма пултаракан событин туйӑмӗпе çыртӑм.

Н. Погодин.

Вӑхӑт лайӑх иртет

Шупашкарти механически савӑтри рабочисем ӗç хыççӑн йаланах библиотекӑна пыраççӗ. Кунта вӗсем шашкӑ-шахмӑтла выляççӗ, кӗнекесем, хаçатсем вулаççӗ. Пӗр икӗ çул кайала библиотекӑра 150 кӗнеке пулнӑ пулсан, пайанхи куна вӗсен шучӗ 500 иртет. Çак çулсенче уйрӑмӑнах библиотека илемлӗ литературӑсем йенчен пуйанланчӗ. Макçим Горький, А. С. Пушкин т. ыт. писателсемпе поетсен произведенийӗсем чылай.

Библиотекӑ заведуйушчинче Угльов йулташ ӗçлет. Вӑл кӗнекесем панипе пӗрлех тата ытти массӑлӑ ӗççене туса пырать. Çӗнӗ хаçатсем йе кӗнекесем тупса, рабочисене вуласа парать, калаçусем те туса иртерет.

К. Пушкин.

Тӗнчери лару-тӑру ыйтӑвӗсене пӑхса тухни

Капиталисӑмлӑ тӗнче фашисла агреççине ытларан та ытла ӳстерсе пынипе пурӑнать. Çав агреççине хирӗç мирлӗ буржуалӑ-демократилӗ текен государствӑсем отпор пани çук-ха. Çавӑнпа ӗнтӗ фашисла вӑрçӑ чӗртекенсене хирӗç халӑх массисем тӑвакан хӑватлӑ выступленисем уйрӑмах чаплӑ та паха пулса тӑраççӗ. Майӑн 1-мӗш кунӗсем йут çӗршывсенче çав выступленисемпе иртнӗ те ӗнтӗ.

Кӑçалхи çул ӗççыннисен массисем майӑн 1-мӗшӗнче тунӑ выступленисем демонстрацине хутшӑннӑисен хисепӗпе те тата характӗрӗпе те иртнӗ çулхи демонстрацисенчен темиçе хут вӑйлӑн иртрӗç. Ун çинчен тӗнчери пӗтӗм пичет те çаплах паллӑ туса çырать. Ӗççыннисен массисем, фашисӑма хирӗç кӗрешекен халӑх пӗрлӗх фрончӗн йалавӗ айӗнче тӑрса, хӑйсен мирлӗ пурнӑçӗшӗн кӗрешес ирӗкне, фашисӑма хирӗç кӗрешес ирӗкне кӑтартса пачӗç.

Нйу-Йоркри демонстрацире 300 пин çын, Лондӑнри демонстрацире—150 пин çын, Прагӑри демонстрацире—100 пин çын, фашисла Польшӑри демонстрацисенче 1 мӗлйун сурӑ çын, пӗр Францире кӑна 460 митингсемпе демонстрацисем, пӗчӗк çӗршывра Швецинче 250 коммунисла выступлени, Мекçикӑри, Аргентинӑри, Кубари, Уругвайри, Канадӑри тата ыт. çӗрти митингсем, демонстрацисем, забастовкӑсем çакӑн пек ӗнтӗ йут çӗршывсенче Майӑн 1-мӗшӗнче пулнӑ выступленисем пӗтӗм пысӑккӑшӗ. Испанире майӑн 1-мӗшӗ кӗрешӳ условисенче фронтра тата фронта пулӑшас ӗçсемпе иртнӗ. Китайра та питӗ пысӑк демонстрацисем пулса иртнӗ. Вӗсен лозунгӗ мӗн çӗнтеричченех, Йапони захвачикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех хӑвалаçа кӑларса йарасшӑн кӗрешесси пулнӑ.

Англире лейбориссемпе тред-йунионсем коммуниссемпе пӗрле демонстрацине тунӑ, ку вӑл Англири рабочи йухӑмӗн историнче пӗрремӗш хут пулнӑскер. Бельгире те социалиссемпе коммуниссен пӗрлехи демонстрацийӗ чи малтанхи хут пулса иртнӗ.

Майӑн 1-мӗшӗнчи демонстрацисем халӑх массисем фашисӑма хирӗç кӗрешме пӗрлӗх фронтне пӗрлешме туртӑннине уççӑн кӑтартса параççӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ, Майӑн 1-мӗшӗнчи демонстрацисем Испани халӑхӗпе, хӑйӗн тӑван çӗршывне хӳтӗлеме çӗкленнӗ Китай халӑхӗпе пӗр шухӑшлӑ пулнине кӑтартакан лозунгсемпе иртнӗ.

„Рабочи клас—мӗлйунсен пурнӑç кунçулӗн хуçи—халӗ хӑйӗн йулашки сӑмахне каламан-ха. Çав сӑмаха фашисӑма хирӗç, вӑрçа хирӗç тӑракан халӑхсем те каламан-ха" (Г. Димитров). Çак сӑмах йепле йантраса тӑрассине Майӑн 1-мӗшӗнчи демонстрацисем кӑтартса пачӗç. Майӑн 1-мӗшӗнчи демонстрацисем фашисӑма тата вӑрçа хирӗç кӗрешекен вӑйсем пӗтӗм тӗнчипех ӳссе пынине кӑтартса пачӗç тата çав вӑйсем пурӑнни çинчен хӑйӑлӑн та шанчӑклӑн каласа пачӗç.

Çав вӑйсем вӗсем миршӗн кӗрешес тӗлӗшпе ССР Союзӗпе пӗр шухӑшлӑн пулса ӗçлесе пыракансем пулса тӑраççӗ, вӗсем хӑватлӑ та шанчӑклӑ союзниксем. Сталин йулташӑн сӑмахӗсем нихӑçанхинчен ытла çивӗч илтӗнсе тӑраççӗ:

„ССР Союзӗнчи рабочи класла буржуалӑ çӗршывсенчи рабочи клас хушшинчи пролетарилле çыхӑнӑва вӑйлатмала тата çирӗплетмеле; пирӗн çӗршыв çине вӑрçӑпа килес тапӑнсан буржуалӑ çӗршывсенчи рабочи клас пирӗн çӗршыври рабочи класа политикӑлла пулӑшу парассине организацилемеле, çавӑн пекех пирӗн çӗршыври рабочи клас буржуалӑ çӗршывсенчи рабочи класа пур майпа та пулӑшассине те организацилемеле...".

**

Халӑх массисем Майӑн 1-мӗшӗнче тунӑ демонстрацисем фашисла вӑрçӑ чӗртекенсене ответлени кӑна пулман, çавӑн пекех тата вӗсене пулӑшакансене, агрессӑрсене хавхалантаракан политикӑна тытса пырса, вӗсене пӗр айӑпсӑр туса хуракансене, агрессӑрсене хавхалантаракан политикӑран агрессӑрпа уççӑнах килӗшӳ тӑвакансене хирӗç ответлени те пулса тӑраççӗ.

Майӑн 1-мӗшӗнчи лозунгсем фашисла агрессӑрсемшӗн кӑна мар, тата Британири капитуляци политикине туса пыракан тата çав çул çине ытти буржуалӑ-демократилӗ государствӑсене тӑратма хӑтланакан хытӑ çамкӑсемшӗн те асӑрхаттарни пулса тӑраççӗ. Çавӑн пек пулнӑ та Англипе Франци хушшинче пынӑ калаçусем вӑхӑтӗнче Британи дипломатийӗн линийӗ.

Англипе Франци хушшинчи калаçусен кун йӗркинче нумай ыйтусем тӑнӑ. Унта кучухнехи тӗнчери лару-тӑрун чи çивӗч ыйтӑвӗсем: Италипе Германин Испанири интервенцийӗ, Чехословаки умне тухса тӑнӑ хӑрушлӑх, Абиссини ыйтӑвӗ, Итали Вӑтаçӗрти тинӗс тӗлӗшпе кӑларса тӑратнӑ ӑмсанусем çинчен, йулашкинчен вара, Англипе Франци вӑрçӑ тӗлӗшпе пӗр пулса ӗçлесси çинчен ыйтусем тӑнӑ.

Англипе Франци вӑрçӑ тӗлӗшпе пӗр пулса ӗçлессине çирӗплетес ыйту Германипе Итали вӗсене хӑратса тӑни тӳрремӗнех вӑйланнӑ май тухса тӑнӑ. Англи консерватӑрӗсем агрессӑрсемпе калаçса татӑлас тесе тем пек хӑтланаççӗ пулсан та, вӗсем Франци чиккисем патӗнче тата Англи патне хӑрушлӑх сывхарса пынине курмасӑр тӑма пултараймаççӗ, Чӑнах та, Францине Германи хушшинчи чикӗ те тата Италипе Франци хушшинчи чикӗ те хӑрушлӑхра; Италипе Германи интервенчӗсем çавӑн пек хӑрушлӑха Францине Испани хушшинчи чикӗре те туса хурас шутпа пӗтӗм вӑйа хурса ӗçлеççӗ.

Англи те пӗчӗкрех мар хӑрушлӑхсем умӗнче тӑрать. Германи авиацийӗ, Париж çине пекех, Лондӑн çине пырса тапӑнма пултарни çинчен каламасан та паллӑ. Çакна асра тытмала: Болдуин—Англин чикки Рейн тӑрӑхӗнче, тесе калани халӑхи вӑхӑтра нихӑçанхинчен ытла çивӗч ыйту пулса тӑрать. Вӑтаçӗрти тинӗс çинчи лару-тӑру та хыттӑнах улшӑнчӗ, унта халь Британи флочӗ пӗччен кӑна хуçа пулса тӑмасть. Çаксене пӗтӗмӗшпе илсен, вӗсем Англипе Францине васкасах хӗçпӑшалланма хушаççӗ, икӗ государствӑ хушшинчи вӑрçӑ тӗлӗшпе тунӑ килӗшӗве вӑйлатма хушаççӗ.

Англипе Франци хушшинчи çар тӗлӗшпе тунӑ килӗшӳ кучухнехи условисенче коллективлӑ хӑрушӑсӑрлӑх ӗçне çирӗплетме тата фашисла агреççи малашне хӑйӗн ӗçне анлӑн туса пырассине хирӗç кӗрешессине çирӗплетме пултарнӑ пулӗччӗ. Анчах Англипе Франци хушшинчи калаçусем çакна кӑтартса параççӗ: Британи дипломатийӗ Англипе Франци хушшинчи килӗшӗве малашне агрессӑрсемпе калаçас çӗрте пысӑкӑн усӑ курмала тума тӑрӑшать.

Англипе Франци хушшинчи калаçусен кун йӗркинче тӑнӑ пур ыйтусене те мӗнле татса панине çеç сӑнаса пӑхмала. Чемберлен йӗртсе пыракан правительствӑ халь те çаплах, малтанхи пекех, фашисла вӑрçӑ чӗртекенсем умӗнче чакас политикӑ тытса пырать.

Италипе Германин Испанири интервенцийӗ тӗлӗшпе тӑракан ыйтура малтанхи пекех Испанири ӗççене хутшӑнмала мар политикӑна, урӑхла каласан, агреççине пулӑшса пыракан политикӑна тытса пымала решени йышӑннӑ. Чехословаки ыйтӑвӗ тӗлӗшпе, Англи Чехословакине пулӑшас тӗлӗшпе мӗнле те пулин обйазательствӑ илессинчен пӑрӑннӑ. Кунтан та ытларах, Англипе Франци хушшинчи калаçусем хыççӑн Чехословаки правительстви Гитлӗр умӗнче пысӑк уступкӑсем тутӑр тесе, Парижпе Лондӑн Чехословаки правительствине иккӗшӗ пӗрле хӗснӗ.

Абиссини çинчен тӑракан ыйтӑва фашисла Италине усӑ кӳмеле татнӑ. Çар тӗлӗшпе тунӑ килӗшӗве илсен, кунта Англи континентра хӑйӗн позицисене çирӗплетессине тунӑ, вӑл Францине нимӗнле çӗнӗ шантарусем те, нимӗнле çӗнӗ обйазательствӑсем те паман.

Çапла вара, Франци тата ытларах Англирен пӑхӑнса тӑмала пурнӑçа кӗрсе ӳкнӗ, хӑйӗн тулти политики тӗлӗшпе тата ытларах Лондӑна пӑхӑнмала пурнӑçа кӗрсе ӳкнӗ. Лондӑн „тӑваттӑн пӗрле тумали пакт" çинчен, урӑхла каласан, тӑватӑ капиталисӑмла çӗршывсен директорине тума ӗмӗтленет, çавсем вара Йевропӑна хӑйсен аллинче тытса тӑмала пулнӑ пулӗччӗ. Çав пакт пулӑшнипе Чемберлен тата К° агрессӑрсем йут çӗршывсене тытса илес ӗмӗчӗсене виçене кӗртме шанаççӗ, хӑйсен çӗршывӗсене туртса илессинчен хӑтӑлма шанаççӗ, çакна тума вӗсем вакӑ государствӑсен интересӗсене, коллективлӑ хӑрушӑсӑрлӑх интересӗсене агрессӑрсене пама пулаççӗ.

Шанчӑксӑр ӗмӗтсем! Британи политикинчи хытӑ çамкалӑ çынсем коллективлӑ хӑрушӑсӑрлӑха пулӑшассинчен пӑрӑнса, агрессӑрпа çума-çумӑнах пӗрлешӳ тума тӑрӑшаççӗ. Англипе Франци çар хӑвачӗ Италипе Германи çарӗсен хӑвачӗнчен вӑйлӑрах пулать пулсан та, Италипе Германи хыçӗнче союзникӗ—Йапони тӑрать. Кунсӑр пуçне, агрессӑра хавхалантаракан политикӑна агрессӑра тытса чарма çук. Çавна опыт кӑтартса пачӗ.

Англипе Франци хушшинчи калаçусен результачӗсене Берлинпа Римра кирлӗ пек хак панӑ. Паллах, Гитлӗр та, Муссолини те Англипе Франци хӑйсем хушшинче вӑрçӑ тӗлӗшпе тунӑ килӗшӗве вӑйлатнинчен хӑраса ӳкмен, вӗсем уйрӑм тревогӑсем тумаççӗ, мӗншӗн тесен. Британин халӑхи тулти политики мӗнле иккенне вӗсем лайӑх пӗлсе тӑраççӗ.

Англипе Франци хушшинчи калаçусене кирлӗ пек хак парса, фашиссен диктатӑрӗсем ӑна çав калаçусене май туса ответленӗ. Епӗр, Гитлӗрпе Муссолини хушшинчи калаçусем çинчен калатпӑр.

**

Англипе Франци хушшинче вӑрçӑ тӗлӗшпе тунӑ килӗшӗве çирӗплетнине хирӗç фашиссен диктатӑрӗсем хӑйсем хушшинче вӑрçӑ тӗлӗшпе тунӑ килӗшӳсене вӑйлатнипе ответленӗ. Ӑна вӗсем „оборонӑла ӗççем" тесе калаççӗ. Италипе Германи тунӑ çӗнӗ килӗшӳ тӗлӗшпе çакӑ пит паллӑ пулса тӑрать: вӗсем çӗнӗрен колонисем тытса илес çӗрте пӗр-пӗрне пулӑшма пулнӑ. Чемберлен агрессӑрсене пӗчӗк татӑксем панипе ырӑ тӑвас ӗмӗчӗсене кӑтартса паракан кусенчен те лайӑх фактсем урӑх кирлӗ-и?

Гитлӗрпе Муссолини тӗнчери çӗнӗ вӑрçа пуçарса йарас пӗтӗмӗшлӗ политикӑ ыйтӑвӗсене кӑна мар татса памала пулнӑ. Çавӑн пекех вӗсем Германи Австрине тытса илнӗ пирки пулнӑ „шалти хусканусене те" лайӑхлатмала пулнӑ.

Пурте пӗлеççӗ, Италипе Германи хушшинче килӗшӳ тӑвас çӗрте Германи йӗртсе пынӑ. Вӑл Италине Дунай бассейнӗнчен, Вӑтам тата Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑç Йевропӑран хӗссе кӑларса пырать. Австрине тытса илни Германи фашисӑмне çав задачӑна пурнӑçа кӗртме çӑмӑллатрӗ. Англи пичечӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Муссолини Гитлӗр умӗнче çӗнӗрен кайала чакнӑ, вӑл Дунай бассейнӗн хӑшпӗр пайӗсенче „Германин економикӑлӑ тата расӑлӑ интерессем ытларах пур", тесе йышӑннӑ.

Дунай бассейнӗнче Италин позицийӗсене начарлатни çакна пӗлтерет: Итали, Германирен пулӑшу илессине шанса, Вӑтаçӗрти тинӗс çинче хӑйӗн позицисене çирӗплетме, Африкӑра хӑйӗн колонийӗсене аслӑлатма хӑтланать. Çапла туни вӑл Англипе Итали хушшинчи хирӗçӳсем те тата Францине Итали хушшинчи хирӗçӳсем те малашне таранланса пынине пӗлтерет.

Çапла вара, Англипе Франци хушшинчи результат тата Италипе Германи хушшинчи калаçусем тӗнчери лару-тӑрӑва йӑвӑрлатса йани пулса тӑраççӗ. Йевропа мирлӗх патне çывхарса пыни çинчен нимӗнле сӑмах та пулма пултараймасть.

И. Виктӑрӑв.

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

Колхоз ударникĕсен паха ĕçĕсем

СЕНТĔРВĂРРИ. Майăн 13-мĕшĕ. Вăрман-кассинчи „Куљтура" колхоз çуракине 6 кун çурă хушшинче пĕтерчĕ. Кăçалхи çуракинче пурĕ 109 гектар тĕштырă, вăл шутран йаровизациленĕ вăрлăхпа 88 гектар, шахматла йĕркепе 25 гектар акса хăварнă. Хĕл вăхăтĕнче хатĕрленĕ минераллă удобренисемпе тĕрĕс уса курнă. Çураки ĕçне пахалăх комиççи членĕсем паха хакласа йышăннă. Агротехникăла ĕççене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçласа пынă.

Колхозра стахановла ĕçлекенсем те чылай палăрчĕç. Акă, А. Владимирăв тата А. Долгов колхозниксем пĕр касăлă плугпа сухаласа нормăна 190-шер процент, И. Çеменăв икĕ касăлă плугпа сухаласа нормăна кулленех 280-шер процент тултарса пынă.

Çейăлкăсемпе акакансенчен Й. Владимирăвпа В. Иванов йулташсем нормăна 200-шер процент тултарса ĕçленĕ. Никитин тата Рыбкин колхозниксем çÿрелес ĕçре пысăк тĕслĕхсем кăтартса пычĕç. В. Долгова, А. Иванова, Л. Николайĕва колхозницăсем вăрлăхсене йаровизацилес ĕçре тăрăшса ĕçлерĕç.

В. Долгова йулташа Вăрманкасси суйлав участки комиççин членĕ пулма уйăрнă. Хаљ вăл РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе аван ĕçлет, çавăн пекех суйлав Положенисене вĕренессине йĕркелесе пырать.

„Куљтура" колхоз Нарат йалĕнчи „Хĕрлĕ Сормова" колхозпа ăмăртать. Ăмăртура „Хĕрлĕ Сормова" кайа йулчĕ. Ку колхозра хаљ те тĕштырăсене акса пĕтермен. „Куљтура" колхоз членĕсем йулса пыракан „Хĕрлĕ Сормова" колхоза ĕçре пулăшас, терĕç.

Пр. Сатур.

Йалхуçалăх выставкине çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн

СИНЕРТИ (Елĕк р.) Жданăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем, хăйсен колхозне Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выставкинче пулма çирĕплетнине пĕлсен, ăмăртса ĕçлессине татах вăйлатрĕç. Синер колхозникĕсем выставкăна йалхуçалăхĕнче пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Çуракине кĕске вăхăтра ирттерчĕç. Вĕсем кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 150 пăт тĕштырă туса илес задачă лартнă. Çавна май колхозра агротехникăла ĕççене пысăк хаваслăхпа туса ирттереççĕ.

Акă вăхăтĕнче стахановĕцсем чăн та тăрăшса ĕçлерĕç. С. Йегорăв; Семешкин колхозниксем плугпа сухалас нормăна 200-шер процент, Г. Золатăв çÿрелес нормăна 180 процент таран тултарса пычĕç. Ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыракан колхозниксем вунпарăн шутланаççĕ.

— Хамăр çине пысăк обйазательства илнĕ, вăл обйазательствăна ĕçре пурнăçласа, Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выставкине кашни гектартан 150 пăт тĕштырă туса илнипе кĕтсе илĕпĕр, — теççĕ колхозниксем.

В. Йефремăв.

Çĕнĕ МТС трактăрисĕсен ĕçĕсем

СЕНТĔРВĂРРИ. (Телефонпа). Васильĕв бригадир йертсе пыракан виççĕмĕш бригадăри трактăриссем çуракинче пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Трактăриссем ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартаççĕ. Акă, А. Çтепанăв трактăрис „СТЗ" трактăрпа кунне 14 гектар сухаланă. Çав вăхăтрах сунтармалине 34 килограм перекътленĕ. Н. Матвейĕв трактăрис „У—2" трактăрпа сменăра 6,28-шер гектар, А. Камбулова та çавнашкалах „У—2" трактăрпа 5,97-шер гектар сухалать.

Трактăрсен ытти бригадисенчи трактăриссем те нормăсене ытлашшипех тултарса пырас тата ĕçе пысăк пахалăхпа тăвассишĕн кĕрешсе ĕçлеççĕ.

ПР. САТУР.

Çулталăк хушшинче пĕр ревизи те пулман

Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх, ревизи комиççин çулталăкра 4 хутран кайа мар ревизи туса ирттермеле. Анчах хăшпĕр колхозсенче çакна пăхăнса ĕçлени çук. Акă, Йансакасси йалсоветне (Çĕрпÿ р.) кĕрекен „Путь Ленина" колхозра ревизи туманни çулталăк иртнĕ. Иртнĕ çулта ревизи тумасăрах тупăшсене валеçнĕ. Çавăн пекех ĕçкунĕсене тĕрĕслесе тухни те пулман, чылай колхозниксене ĕçкунĕсене тĕрĕс лартса паман пулнă. 70 çула çитнĕ И. Максимăв колхознике 5 ĕçкунĕ лартса памасăр хăварнă. В. Терентйĕв счетовод хăйне ытлашшипех ĕçкунĕ çырса хунă.

Колхозра ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Парти Тĕпкомĕ апрелĕн 19-мĕшĕнче „Колхозниксене колхозран кăларма чарасси çинчен", „Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс мар валеçни" тата „Йединоличниксен хуçалăхĕсем çине хунă налогсемпе ытти обйазательствăсем çинчен" йышăннă постановленисене ку вăхăтченех сÿтсе-йавман. Иртнĕ çулта „Путь Ленина" колхозра тупăшсене тĕрĕс мар валеçнĕ. Ĕçкунĕсем тăрăх укçан пачах валеçмен, укçан илнĕ тупăша унта-кунта салатса йанă.

Çураки ĕçĕ те колхозра йулса пырать. Колхоз правленийĕнче ĕçлекенсем вăйлă тырпулшăн кĕрешессине, ăмăртса ĕçлессине организацилемеççĕ.

Тунă йăнăшсене халех тÿрлетме тытăнас пулать. Ревизи комиççин колхоза 3 уйăхра пĕр хутчен ревизи туса тăмала.

Колхозник.

Кирпĕч тăвакан бригадă

Йетĕрне. Кăташри „Пионер" колхозра кирпĕч тăвассипе уйрăм бригадă пур. Ку бригадăна 1936 çулта организациленĕ. Колхозниксем, кирпĕч тăвакан бригадă пысăк уса панине курă, кăçал вăл бригадăна татах пысăклатрĕç.

Иртнĕ çулта 8 çынтан тăракан бригадă 60.000 штук кирпĕч туса кăларнă. Кăçал бригадă членĕсем 70.000 штук туса кăларма обйазательствă илчĕç. Колхозри паллă стахановĕç А. Семйашкин йулташ 12 пин штук кирпĕч тума пулчĕ. Вăл иртнĕ çулта та 10 пин штук туса кăларнă.

Халĕ бригадă ĕçе тытăнчĕ. Бригадăна И. Йакăвлĕв йулташ йертсе пырать.

Мих. Моисĕйĕв.

Сат ĕрчетеççĕ

Кăшаркассинчи „Пионер" колхоз (Çĕрпÿ р.) иртнĕ кĕркунне 3 гектар çине 285 тĕп улма йăвăçĕ, 1.700 тĕп хăмла çырли, 250 тĕп чей çырли йăвăççисем лартса хăварчĕ.

Колхозра сат пахчинче ĕçлеме 5 çынтан уйрăм звено организациленĕ. Звенопа Григорйĕв йулташ йертсе пырать.

Халĕ сат ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен звено улма йăвăççисене тасатас, вĕсен таврари тăпрана кăпкалатас, тислĕк сарас ĕçе тытăнчĕ. Сат ĕçĕнче ĕçлекенсем пушă вăхăтра сат-пахча çинчен çырнă кĕнекесем тата хаçат-журналсем вулаççĕ. Кунпа пĕрлех РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене те тĕплĕн вĕренеççĕ.

Н. Окунĕв.

Пĕрремĕш Туçари „Енĕш" колхоз (Вăрмар р.) иртнĕ çулта сат ĕрчетме тытăнчĕ. Кăçал улма йăвăççисем хушшине тĕрлĕрен çырла йăвăççисем лартса хăварчĕ.

Колхоз ку сатран кăçал малтанхи хут тупăш илмĕ шутлать.

Павлăв, Аниçимăв.

Суйлав участки—агитацилĕ-массăлă ĕçĕн центрĕ

Агитатăр ĕçĕ—хисеплĕ ĕç

ЙЕТĔРНЕ. Ту-Мучар йалсоветĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ чухне тăрăшса ĕçленĕ активиссем хаљ те тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă, Тимофейĕв комсомолĕç иртнĕ суйлавра Ту-Мучар суйлав участкин секретарĕ пулса ĕçлерĕ. Халĕ вăл вулав çуртĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Йалсоветĕнче куљтмассăлă ĕçе аван организациленĕ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме 10 кружок организациленĕ. Ку кружоксенче 557 çын вĕренет. Тимофейĕв йулташ агитатăрсене пухса канашлусем ирттерет, ĕç планĕсене парать. Çав хушăрах хăй те агитатăр пулса ĕçлет. Вăл йертсе пыракан кружокра пурĕ 97 суйлавçă вĕренеççĕ. Акă мĕн калаççĕ Тимофейĕв агитатăрăн кружокне çÿрекен суйлавçăсем:

— Суйлав кунĕнче — июнĕн 26-мĕшĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене тăван çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, халăх тăшманĕсене çĕмĕрсех пыма, вĕсене пĕтĕмпех тăпăлтарса тăкма пултаракансене суйлатпăр!

— Хамăрăн тăван коммунисла партипе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен хăватлă блокне тата вăйлăрах çирĕплетĕпĕр.

Ник. Цветков.

Лайăх агитатăр

Патăрйел. Çĕнĕ Ахпÿртри Сталин йачĕпе тăракан колхозра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенийĕсене вĕренме 22 кружок организациленĕ. Çак кружоксенче вĕренме 865 çынна хутшăнтарнă. Кружоксене йертсе пыма 22 агитатăр уйăрнă. Вĕсенчен 12 учител, 6 çын колхоз бригадирĕсем, ыттисем актив-ла ĕçлекен йалсовет членĕсем.

Агитатăрсенчен колхозник В. Макарăв чи лайăх ĕçлет. Вăл йертсе пыракан кружокра 35 çын вĕренеççĕ. Макарăв йулташ колхозниксем хушшинче авторитетлă. Заљатисене вăл йĕркелĕ ирттерет. Суйлав саккунне вĕрентнĕ чухне капиталисămлă çĕршывсенчи ĕççынисен йăвăр пурнăçĕ çинчен тата Совет çĕршывĕнчи ĕççынисен савăнăçлă пурнăçĕ çинчен тĕплĕн калаçса кăтартать.

Трактăриссем ку колхозра сухалана вăхăтра Макарăв сухаç пулса ĕçленĕ. Канна вăхăтсенче вăл бригадăра суйлава хатĕрленес ыйтупа калаçусем ирттернĕ, хаçатсем тата кĕнекесем вуласа панă. Унăн кăсйинче йаланах кĕнеке, хаçат. Каç-каç урамсенче ушкăнпа ларакан колхозниксем йаланах Макарăва чĕнсе хаçат йе кĕнеке вуласа пама ыйтаççĕ.

К. Павлăвă.

Суйлав литератури çук

Елĕк районĕнчи суту-илÿ организацисем суйлав кампанине начар хатĕрленеççĕ. Районри йалпосенче суйлав çинчен кирлĕ литература çукпа пĕрех. Çавăн пекех суйлавра кирлĕ йапаласем: плакат, лозунг, радио хатĕрĕсем, хĕрлĕ матерись çителĕксĕр.

Д. Карикăв

Оренбург облаçĕнчи Орск районĕ, ĕлĕк чухăн район пулнăскер, халĕ промышленнăçлă пысăк центр пулса тăрать. Кунта халĕ никĕл комбиначĕ тата нефть савăчĕ лартаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те кăçал ĕçе кĕме тытăнмала.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Нефть савăчĕн крекинчĕ.

Рубейĕв фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Округри суйлав комиççин малтанхи ĕçĕсем

ТРАК. ЧАССР Верховнăй Совечĕ суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Исакăва округĕн суйлав комиççи членĕсене промышленнăçра, колхозра, советра парти ĕçĕсенче, обшчĕствăлă организацисенче хăйсен пултарулăхĕсене палăртнă, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене суйларĕç. Округри суйлав комиççи членĕнче Иван Васильĕв, — „Исакăвă" колхоз членĕ. Вăл йалсовет председателĕнче 5 çул ĕçленĕ. ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампанинче участкăри суйлав комиççи председателĕ пулса ĕçленĕ. Колхозниксем пĕр кăмăллăн сĕннипе Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн президиумĕ Васильĕв йулташа Исакăвă суйлав округĕн комиççи председателĕн заместителне çирĕплетнĕ.

Илйа Андрейĕв йулташа округри суйлав комиççи членĕ пулма кĕçĕн вăтам шкулта вĕрентекенсен профессиллĕ сойузĕнчен уйăрнă. Андрейĕв йулташ иртнĕ суйлавра участкăри суйлав комиççи секретарĕнче ĕçленĕ, халĕ вăл округри суйлав комиççи секретарĕнче ĕçлет. Михайлăв Григорий Михайлăвич—граждăн вăрçи геройĕ, Хĕрлĕ йалав орденне илнĕскер, колхоз производствинче тăрăшса ĕçлет. Вăл çуракинче ĕç нормине 120 процентшер тултарса пырать. Ăна „Вăрманкас" колхозниксен пухăвĕнче округри суйлав комиççи членĕ пулма суйланă.

Майăн 8-мĕшĕнче Исакăвăри суйлав округ комиççин пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларура округри суйлав комиççи членĕсене вĕсен задачисемпе паллаштарчĕç. Суйлав комиççи членĕсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерес, суйлав техникине лайăх пĕлес тĕлĕшпе кашни 5 кунта пĕрер заљати туса ирттерме йышăнчĕç. Округри суйлав комиççи ĕç планне тата округ комиççин канцељаринче комиççи членĕсем черетлĕн дежурствăра тăма йышăнчĕç. Округри суйлав комиççин кашни членĕ уйрăм суйлав участкисене хăйсен çумне илсе, участкăри комиççисене лайăх пулăшса пыма пулчĕç.

Исакăвă суйлав округĕн комиççийĕ лайăх çуртра вырнаçнă. Çурт тăпинче Государствă флагне çакнă. Çынсем çÿрекен вырăнсенче округ комиççин канцељари ăçтине кăтартакан паллăсем çакăнса тăраççĕ.

Пайăна илсен, округри суйлав комиççине кĕрекен 13 участкă валљли хут тата канцељаринче кирлĕ йапаласем çителĕклĕ туйаннă. Халĕ участкăсенчи суйлав комиççисене организацилеме хатĕрленеççĕ, унта ĕçлеме членсем уйăрасси пырать. Обшчĕствăлă организацисемпе ĕççынни обшчĕствисем участкăри суйлав комиççи членĕсем пулма чи паллă, ĕçре тĕрĕсленĕ çынсене палăртрĕç. Ку çынсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленес ĕçе татах та вăйлатаççĕ. ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕнчи лайăх опытсемпе уса курса РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене татах та лайăхрах, организацилĕрех ирттерме хатĕрленеççĕ.

Исакăвă суйлав округĕнчи суйлав комиççи председателĕ

Г. Закамский.

Стахановĕцсемпе ударниксем суйлав комиççисенче

ПАТĂРЙЕЛ (хамăр корр., телефонпа). Райĕçтăвком РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен участкăсенчи 38 суйлав комиççисен составне çирĕплетнĕ.

Вĕсенче—266 çын. Комиççисенче ĕçлеме колхозсенчи стахановĕçсене, ударниксене районăн паллă çыннисене палăртнă.

Анат Туçари „Çăлтăр" колхоз членĕсем участкăри суйлав комиççин членĕ пулса ĕçлеме пысăк тухăçлă кантăр маçтăрне, бригадир-стахановĕça Алексей Афанасйĕвич Плешков йулташа сĕннĕ. Ăна çĕвĕ çĕлемели машинă парса премиленĕ. Кăçал вăл 11 гектар çине пысăк пахалăхпа кантăр акса хăварчĕ.

Кивĕ Сентĕрти „Правда" колхоз членĕсем суйлав комиççинче ĕçлеме хăйсен йуратнă колхозникне пахалăх инспекторне —И. И. Тарасăв йулташа палăртнă.

„Хĕрлĕ Туçа" колхозникĕсем участкăри суйлав комиççинче ĕçлеме хăйсен лайăх ĕçлекен бригадирĕсенчен пĕрне—Иван Анисимăвич Табаков йулташа уйăрнă.

Табаков йулташăн бригади иртнĕ çулта вăтам шутпа гектартан 21 центнĕр ытла тырă туса илнĕ.

Кăçал çуракине планпа пăхниччен пĕр кун маларах пĕтернĕ.

Çавнашкалах „РОКК" колхоз членĕсем колхозри ударницăна, парти кандидатне—Агрипина Константинăвна Кудрйавцĕва йулташа, Сталин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем—Н. А. Колпакова йулташа, Татмăшри Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ хăйĕн активисткине Пçагина Анфиса Димитрийĕвнăна уйăрнă.

Ник. Пушкин.

Чи лайăх çынсене палăртаççĕ

ШĂХАСАН (хамăр корр.) Райĕçтăвком районра 25 суйлав участакĕ турĕ. Участкăсенчи суйлав комиççисенче ĕçлеме кандидатсем тăратас ĕç пуçланчĕ. Обшчĕствăлă организацисемпе ĕççынни обшчĕствисем коммуниссене, комсомолĕçсене, партире тăман активиссене палăртаççĕ. Атнаш колхозникĕсем участкăри суйлав комиççине Кирăв йачĕпе тăракан колхоз правлени председателне Йакимăв йулташа, Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем участкăри суйлав комиççинче ĕçлеме колхозник Никишĕв йулташа тăратнă.

В. Чернов.

Пысăк ĕç çине çийелтен пăхаççĕ

Шупашкар хулинче суйлавçăсен спискисене тĕрĕслесе тухаççĕ, çĕнĕрен хутшăннă суйлавçăсене спискăна çыраççĕ. Хула совечĕ çак ĕçе ирттерме хула совечĕн депутачĕсене тата коммуниссемпе комсомолĕçсене пурĕ 120 çын хутшăнтарнă.

Суйлавçăсен спискисене Положенире кăтартнă тăрăх тумала. Пĕр суйлавçă та спискăна кĕмесĕр ан йултăр. Çитес суйлавра кашни суйлавçах хăйĕн гражданла пысăк тивĕçĕпе уса курма пултартăр. Анчах та Шупашкар хулинче суйлавçăсен спискисене тăвас тата çĕнĕрен хушса çырас ĕççене кирлĕ пек туса пымаççĕ. Майăн 13-мĕшне илсен 7 суйлав участки тăрăх çеç суйлавçăсен спискисене тĕрĕслесе тухнă. Çитменнине тата хăшпĕр участкăсенче çак ĕçе питĕ çийелтен, ответлăха туймасăр тăваççĕ. 2-мĕш суйлав участкинче суйлавçăсен спискисене тĕрĕслес шутпа Савелйĕв (спирт савăчĕ) йулташ ĕçлет. Вăл ĕçе питĕ çийелтен тăвать. Чувашскайа урамра кирпĕч савăтĕнчи рабочисен баракĕнче Воловатăвă Матрена Афанаçйĕвна пурăнать. Унăн ашшĕ йатне „Иванăвна" тесе çырса хунă.

Хулара пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакан суйлавçăсем те нумай. Суйлав Положенийĕ тăрăх, 1920 çулта ийунĕн 26-мĕшне çитиччен çуралнисем суйлава хутшăнма тивĕçлĕ. Апла пулин те кирпĕч савăчĕн обшчĕжитинче пурăнакан, 1920 çулта ийулĕн 16-мĕшĕнче çуралнă Илйин Петр Илйич йулташа суйлавçăсен спискине кĕртнĕ. Майăн 25-мĕшĕнче суйлавçăсен спискисене пурне те курăнмала вырăна кăларса çакмала. Вăхăт нумай йулмарĕ. Анчах та Шупашкар хули совечĕ суйлавçăсен спискисене тăвассине вăрăна тăсать.

Т. Майорăв.

Участкăсенчи суйлав комиççисен ĕçĕсене боЉшевикла организацилер

Халĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 103 суйлав округĕ ĕçе тытăннă. Райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсем чылай çĕрте суйлав участкисене тунă. Суйлав Положенийĕ тăрăх, участкăсенчи суйлав комиççийĕсене обшчĕствăлă организацисен тата ĕççынни обшчĕствисен представителĕсенчен тăваççĕ. Вĕсене райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсен суйлавччен малтан 40 кунран кайа йулмасăр, урăхла каласан, майăн 18-мĕшĕнчен кайа йулмасăр çирĕплетмеле. Халĕ обшчĕствăлă организацисемпе ĕççынни обшчĕствисем участкăсенчи суйлав комиççисенче ĕçлеме хăйсен представителĕсене тăратас ĕç хĕрсе пырать.

Участкăсенчи суйлав комиççисем çине пит те пысăк тата хисеплĕ ĕç хунă. Вĕсен суйлав саккунне тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымала, Сталинла Конституци совет гражданĕсене панă правана кашни суйлавçăна пурнăçа кĕртме май туса парас тĕлĕшпе ĕçлемеле.

Суйлав кампанин пĕтĕм организацилĕ ĕçĕ, суйлавсене лайăх организацилесси участкăсенчи суйлав комиççисенчен килет. Суйлав комиççисене совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене, социализăм ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен çынсене палăртмала.

Участкăсенчи суйлав комиççисенче ĕçлеме çынсем суйланă чухне иртнĕ суйлавра хăшпĕр çĕрте тунă йăнăшсене шута илмеле. Уйрăм вырăнсенче колхозсемпе совхозсенчи, предприйатисенчи бÿрократла работниксем участкăсенчи суйлав комиççи членĕсене суйламан, вĕсене рабочисен, колхозниксен, ĕççыннисен пухăвĕнче сÿтсе-йавмасăрах назначени йĕркипе суйлав комиççи членĕ туса хунă.

Иртнĕ суйлав кампанинче, уйрăм руководителсен политикăлă тимсĕрлĕхне пула, хăшпĕр участкăсенчи суйлав комиççи составне политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăр çынсем, халăх тăшманĕсем те кĕрсе кайнисем пулнă. Нумай çĕрте çавнашкал етемсене суйлавçăсем хăйсем тăрă шыв çине кăларнă, вĕсене участкăсенчи суйлав комиççисен составĕнчен кăларма партипе совет организацийĕсене пулăшнă.

Суйлав кампанин анăçулăхне—суйлав участки татса парать. Çавăнпа та участкăсенчи суйлав комиççисенче чи шанчăклă çынсем ĕçлемеле. Çавăнпа обшчĕствăлă организацисемпе ĕççынни обшчĕствисем хăйсен чи лайăх представителсене участкăсенчи суйлав комиççисенче ĕçлеме тăратаççĕ. Пирĕн корреспондент çырса пĕлтернĕ тăрăх, Патăрйел районĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен участкăсенчи 38 суйлав комиççисен составне çирĕплетнĕ. Суйлав комиççисенче 266 çын ĕçлемеле. Обшчĕствăлă организацисемпе ĕççынни обшчĕствисем суйлав комиççисене суйланă çынсем—стахановĕцсем, ударниксем.

Пирĕн республикăра участкăсенчи суйлав комиççисенче темиçе пин çын ĕçлеççĕ. Çавăнпа та участкăсенчи суйлав комиççисен ĕçĕсене организацилесси, унта ĕçлекен йулташсене пулăшасси çине питĕ тимлĕн çаврăнса пăхмала. Округри суйлав комиççисен, райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсен участкăсенчи суйлав комиççисене суйлав техникине лайăх вĕрентмеле, организацилĕ ĕççене тума пулăшмала.

Участкăри суйлав комиççисен хăйсен ĕç планĕ пулмала. Суйлав участкисене йĕркене кĕртмеле, вĕсене халăха йавăçтармала илемлетес пулать. Суйлавçăсен спискисене тĕрĕслемеле, кашни суйлавçăна Сталинла Конституци паракан правапа туллин уса курма май тумала. Суйлав умĕнхи йулашки 20 кун хушшинче участкăри суйлав комиççи кулленех суйлав кунĕпе суйлав ăçта пуласси çинчен суйлавçăсене анлăн пĕлтерсе тămala. Çак ĕçе мĕнле майпа тумалине халех палăртса хумала. Ку çеç мар, участкăри суйлав комиççине пана заявленисемпе жалăбăсене хăвăрт пăхса тухассине те лайăх организацилемеле.

Çапла ĕнтĕ, участкăсенчи суйлав комиççисен питĕ пысăк ĕçсем туса ирттермеле. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанине анăçлă ирттерме участкăсенчи суйлав комиççисен ĕçĕсене боЉшевикла организацилемеле.

Мускаври метрополитенăн виçĕ çулхи ĕçĕ

Майăн 15-мĕшĕнче Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан метрополитенăн пĕрремĕш черетре туна радиусне ĕçе йани виçĕ çул тултарать.

Метрополитен Хĕрле столицăн ĕççыннисен йăлине çирĕппĕн кĕрсе вырнаçнă. Виçĕ çул хушшинче тĕнчери чи лайăх çĕр айĕнчи чукун çул тăрăх, Мускаври метрополитенре, 640 пин ытла пуйăс çÿренĕ. Вĕсемпе 372 мĕлйун пассажир çÿренĕ. Малтанхи вăхăтра метрополитен талакра 177 пин пассажир илсе çÿренĕ пулсан, халĕхи вăхăтра 490 пин пассажира йăхан илсе çÿрет.

1935 çулта метрополитен трассине 15 мăшăр пуйăс тухнă, кăçалхи çулăн виççĕмĕш пайĕнче 24 мăшăр çÿренĕ. Пуйăссен çÿрес хăвăртлăхĕ те ÿснĕ. Метрополитенăн пĕрремĕш черетне ĕçе йана чухне експлоатаци хăвăртлăхĕ пĕр сехетре 22,4 километр пулнă, халĕхи вăхăтра 31,8 километр шутланать.

Метрополитена ĕçе йани виçĕ çул тултарнă тĕле Мускаван 26,5 километр тăршшĕ çĕр айĕнчи йукуйçул тата 22 станци пур. Вĕсем кашнийех—социализмла çĕнтерÿсен образецĕ пулса тăраççĕ.

Пысăк опытпа пуйанланнă метрополитен тăвакан рабочисем çĕр айĕнчи çулăн виççĕмĕш черетне тума тытăнаççĕ. Вăл çула туса пĕтерсен, Мускаври метрополитенăн вăрăмĕшĕ 43 километртан иртмелĕ.

(ТАСС)

Кĕскен

— Воронеж облаçĕнче сахăр кăшманĕ акса пĕтереççĕ. Колхозсем 82.600 гектар, акмали çĕр тăнкĕшĕнчен 98 процентне акнă. Çав кунă çĕрĕн тăваттăмĕш пайĕнче кăшман калчисене сайралатса тухнă та ĕнтĕ.

— Тбилисире Берийа ячĕпе тăракан „Динамо" стадионĕнче майăн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕнче малти вырăна тухассипе Тбилисири „Динамо" обществин мăстăрĕсен футбол командипе Мускаври „Локомотив" обществин команди хушшинче пĕрремĕш тĕл-пулу пулса иртнĕ. Матч 2:0 шутпа—Тбилисири команда çĕнтернипе пĕтнĕ. Матч курма Тбилисири ĕççынĕсем пурĕ 30 пин çын ытла пынă.

— Государствăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш сехет савăчĕсем 1938 çулхи иртнĕ 4 уйăх хушшинче пĕр мĕлйун та 260 пин сехет ытла туса каларнă. Пĕтĕм çулталăк хушшинче 4 мелйун та 700 пин сехет туса кăларма шухăшлаççĕ.

Шупашкарти маçари чирĕпе кĕрешекен станцинче ĕçлекенсен ачисем кăну вăхăтĕнче

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Ытларах електроенерги кăларассишĕн

Шупашкарти електростанцинче пур бригадăсем те ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни бригадă ытларах електроенерги туса кăларассишĕн, аварипулассине пĕтерессишĕн тата çунтармали йапаласене перекетлессишĕн кĕрешет.

Çак йулашки кунсенче електроенерги кăларассипе уйрăмах Воздвиженски йулташ йертсе пыракан 2-мĕш бригадă малта пырать. Унăн бригади майăн 11-мĕшĕнче 1619 киловат сехет електроенерги туса кăларас вырăнне 2065 киловат сехет туса кăларса плана 127 процент тултарчĕ. Майăн 13-мĕшĕнче тата ытларах ÿсĕм турĕ, 2024,49 киловат сехет туса кăларса, нормăна 131 процент пурнăçларĕ.

Воздвиженски йулташ бригади Поçаков йулташ бригадипе ăмăртса ĕçлет. Поçаков йулташ бригади те мала тухассишĕн кĕрешет. Майăн 13-мĕшĕнче унăн бригади 3.474 киловат сехет електроенерги туса кăларса (нормă 2594 киловат сехет) плана 134,1 процент тултарчĕ.

Бригадăсем лайăх ĕçленĕ май пĕтĕм станцă та паха тĕслĕхсем кăтартать. Майăн 11-мĕшĕнче плана 120 процент тултарнă пулсан, 13-мĕшĕнче 128 процент тултарчĕ.

А. Данилăвă.

Массăлă крос

Майăн 12-мĕшĕ. Ирхине 10 сехетрех Шупашкарти строителĕсен клубĕн пахчине хула халăхĕ пухăнма пуçларĕ.

12 сехет. Пахчара тулли халăх. Хăшĕсем волейболла выçаççĕ, теприсем турник, пусма çинче, волейбол вăййине выçаççĕ. Кунтах массăлă ташă, йурă.

Çапла пуçланчĕ Шверник ячĕпе тăракан массăлă крос.

Крос пуçланас умĕн хулари ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиççи председателĕ А. Краснов йулташ тухса сăмах каларĕ.

Краснов йулташ хыççăн профсойузсен ячĕпе Филиппăв йулташ тухса каларĕ.

Митинг хупăннă хыççăн массăлă крос пуçланчĕ. Чи малтанах 500 метрлă чупува хĕрарăмсем тухрĕç. Унтан арçынсем 1000 метр хушшине ăмăртса чупма тытăнчĕç.

Пайанхи чупура арçынсенчен чи малти вырăна С. Мурашкин йулташ („Спартак" обществи) тухрĕ. Вăл 1000 метр хушшине 2 минут та 58,8 секундра чупса тухрĕ. II—III—IV-мĕш вырăнсене П. Майорăв („Спартак" обществи), Гребçов, („Учитель" обществи), Кошеçов (Çалхуçалăх институчĕ) йулташсем йышăнчĕç. Хĕрарăмсенчен пĕрремĕш вырăна М. Гущина йулташ („Спартак" обществи) йышăнчĕ. Вăл 500 метра 1 минут та 29,6 çекундра чупса тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна Бочкарйова („Учитель" обществи) йышăнчĕ. Вăл 500 метра 1 минут та 36 секунд, виççĕмĕш вырăна Михайлăвă (Максим Горький ячĕпе тăракан шкул) йышăнчĕ, вăл 500 метр хушшине 1 минут та 38 секундра чупса тухрĕ.

Хар. Лисин.

Футбол вăййипе хулари малти вырăншăн
„Динамо"—„Буревестник" 7:6

Ăмăртун иккĕмĕш кунĕнче, майăн 11-мĕшĕнче, „Динамо" тата „Буревестник" командисем выçарĕç. Икĕ команди те пĕрпекех выçаççĕ. „Буревестник" командин футболисĕсем çамрăксем пулин те тăрăшса, вăйă техникине çавхăнса выçаççĕ. „Динамо" команди футбол вăййин саккунне пăхăнмасăр, халичченех „Буревестник" командинче выçанă йĕслĕра хăй патне илнĕ. Кăна физкултурăпа спортăн хула комитечĕ те „систенем". Кăçал пур командăсенче те тенĕ пекех выçакансем пиtĕх те улшăнса пĕтнĕ. Ку ĕнтĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкултурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ футбол командисене йĕркелĕх тăвассишĕн тăрăшманни çинчен калать.

Спартаковецсен çĕнтерĕвĕ

Майăн 12-мĕшĕнче спартаковецсем „Буревестник" командипе выçарĕç. Вăйă 5:2 шутпа „Спартак" обществин 1-мĕш команди çĕнтернипе пĕтрĕ. Командари Илйин, Зефирăв (защитă), Йенчикăв (полузащитă) Хрисанфăв, (центрнападени) тата Афанасйев йулташсем уйрăмах лайăх выçанине палăртмала.

Ÿсĕмсем тăватпăр

ИШЛЕЙ. Инвалидсен Елмекассинчи производствăла ертелĕнче ĕçлекенсем халĕ чылайĕшĕ кулленхи ĕç нормине иртерсе тултарса пыма пуçларĕç. Хăшпĕр рабочисем майăн 5-мĕшнех иккĕмĕш квартăл планне тултарчĕç. Акă сăмахран, Д. Осипăв йулташ—125 процент, Йе. Васильева—112, И. Сазанăв—101 процент, К. Антонăв—100 процент тултарчĕç. Кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыракансем ертелре халĕ 19 çын шутланаççĕ.

В. Сочнăв.

Искусствăн пулас маçтарĕсем çинчен

Улатăрти художествăлла гравюрă училищи пирĕн республикăри издательствăсем валли график-художниксем тата вăтам шкулсем валли художник-педагогсем хатĕрлекен пĕртен-пĕр шкул пулса тăрать. Ку училищă 1934 çултанпа ĕçлет, унта хаçĕ 80 ача вĕренет.

Калас пулать, искусствă ĕçĕн руководствинче пулнă халăх тăшманĕсемпе вĕсен агенчĕсем училищăна сахал мар сăтăр тунă. Вăл тăшмансем училищăра вĕренекенсенчен мăшкăланă. Вĕсем 18 тĕслĕ предмĕтран 7 предмет çеç вĕренÿ программине кĕртнĕ. Вăл шутран сакнашкал кирлĕреn, те кирлĕ предметсем историй, географи, хими, педагогика, пичет техники предмечĕсем программăна кĕмесĕр йулнă. Çапла вара çак пĕтĕмĕшле пĕлÿлĕхсем паракан предметсĕр ку училищă культурăлă предприйати пек çеç пулса тăнă.

Вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ пулнă шурă офицер ачасене патша чиновникĕсен меслечĕсемпе „вĕрентнĕ". Çак тăшман, буржуалла-националист, училищăри чăваш ачисем çинчен елеклĕ сăмахсем сарнă.

Училищăн директăрĕ пулнă Морозăв (халĕ вăл парти ретĕнчен кăларнă) тăшмансен ĕçĕсене таксăнах пĕлсе тăнă. Анчах вĕсене вăл кабинета чĕнтерсе çеç сийенсĕр критикленĕ, урăх нимĕн те туман.

Çапла ĕнтĕ, искусствăн пулас маçтарĕсене хатĕрлекен республикăри пĕртен-пĕр шкула тăшманла елементсем сахал мар сийенленĕ.

Училищăра тăшманла ĕçсен йулашкийĕсене тĕпренех пĕтерес тĕлĕшпе нумай ĕçлемеле пулать. Пулашки вăхăтра училищăри вĕренÿ паха лăхĕ чылай çÿле хăпарчĕ. Виççĕмĕш курсра вĕренекенсем 3 уйăх практикăра пулнă хушăра хăйсен пултарулăхĕсене вырăнсенче кăтартса пурте тенĕ пек лайăх отзывсем илсе килчĕç.

Преподавательсен составĕ те нумай çĕнелсе çирĕпленчĕ. Аслă шкул пĕтернĕ специалиссем иртнĕ çулсенче ку училищăра пĕрре те пулман. Халĕ икĕ преподаватель художествă академинче вĕренсе тухнă йулташсем ĕçлеççĕ, çак кунсенче тата виçĕ йулташ килессе кĕтетпĕр.

Чăваш республикĕ 20 çул тултарнă тĕле уçалакан выставкăна хатĕрленес тĕлĕшпе пирĕн училищăра вĕренекенсем нумай паха ÿкерчĕксем турĕç. Вĕсен ăнăçулă ĕçĕсем çине пăхса çылай пысăк ÿсĕм куратăн.

Калас пулать, çамрăксене вĕренме училищăра пур условисем те çителĕклĕ пулсан, вĕсен творчествăлă ĕçĕсем татах та пахарах, ăнăçлăрах пулса пымалă. Чи малтанах, шкул çурчĕ пĕчĕккĕ пирки мĕн пур ĕç йавăрланать. Урoксен вăхăтĕнче ниçта савăрăнма та вырăн çук, 80 ача валли 165 тăваткăл метр çеç. Класра тĕттĕм. Чÿречесем ансăр. Çакнашкал пÿлĕмре краскăсемпе сăрласа картинăсем тума канçăр икенни паллă ĕнтĕ.

Суртпĕр ыйтăвĕ пирки училищă дирекцийĕ районри организацисене те, республикăри искусствă ĕçсен управленине те темиçе хутчен пĕлтернĕ. Анчах вĕсем нимĕнле пулăшу та памаççĕ-ха. Кадрсем хатĕрлес ĕç çине çакнашкал сÿрĕккĕн пăхас йăлана паллах, халех пĕтерни кирлĕ.

Мйасников—Улатăрти художествăлла гравюрă училищин директăрĕ.

Ачасен пĕлĕвне тĕрĕслес умĕн

Ураскилтри (Елĕк р.) туллимар вăтам шкул ачасене пĕлÿ тĕрĕслевĕн программипе паллаштарчĕ. Вĕренÿре çачартарах ĕлкĕрсе пыракан ачасемпе учителсем хăшпĕр предмедсем тăрăх консультацисем туса ирттереççĕ. Ачасем консультацисенче хăйсен активлăхне кăтартаççĕ, ăнланман ыйтăвсем тĕл пулсан ыйтса пĕлеççĕ. Учителсем халĕ пĕлÿ тĕрĕслевне ирттерме плансем, расписанисем тата кашни ача валли уйрăм билетсем туса хатĕрлерĕç.

И. Нарышкин.

СУД

Ачине вĕлернĕшĕн

Магарин ялсоветĕнчи (Çĕмĕрле районĕ) Петропавлăвск поçолкинчи Варварă Максимăвă 1937 çулхи декабĕрĕн 4-мĕшĕнче ача çуратнă та ачине вĕлернĕ. Хăйĕн тискер ĕçне пытарас тесе, вăл вĕлернĕ ачине тĕп сакайне пытарнă. Хăй ача çуратнине тунаçшăн пулнă, ĕçе тĕпчене вăхăтра тин калаçа пăнă.

Çĕмĕрле районĕнчи халăх сучĕ Варварă Максимăвăна Уголовлă Кодексăн 136-мĕш статйи тăрăх айăплаçа, 5 çуллăха тĕрмене лартмала тунă.

Совет футболĕ

Спортăн тава тивĕçлĕ маçтарĕн Н. Старостин статйи

Халĕ Совет Сойузĕнче футбол—халăх хушшинче анлан саралнă спорт, вăл çĕршер пин активлă футболиссене пĕтĕçтерсе тăрать, мĕлйуншар çын футбол вăййине пăхса саванаççĕ.

Ылханлă патша вăхăтĕнче вырăс футболĕ Йевропăра чи кайри вырăнта пулнă. Вăл çăнахах та апла пулнине вырăссен суйласа пухнă команти 1912 çулта, Стокголмра пулса иртнĕ олимпиадăра выçаса йани те питĕ лайăх çирĕплетсе парать.

Халхи вăхăтра совет футболĕ Йевропăри малти вырăнсенчен пĕрине йышăнса тăрать. Çак йулашки çулсенче пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери тĕлпулусем совет футболисĕсен вăйне уççăн кăтартрĕç. Ăна çак тĕслĕхсем çирĕплетеççĕ: Мускаври сборнăй командă 1934 çулта 3:2 шутпа Чехословакири „Жиденице" йатлă клубан командине çĕнтерни, Украина сборнăй команди 1935 çулта, Парижре Францин „Род Стар" командине 6:2 шутпа çĕнтерни; „Динамопа" „Спартак" командисем 1936 çулта Турцин сборнăй командине çĕнтерни, йулашкинчен тата, 1937 çулта „Спартак" команди баскĕсен вăйлă выçакан командине 6:2 шутпа çĕнтерни. Ку командăсен составĕсем, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, ытти клубсенчен куçнă вăйăçăсемпе, унтан та ытларах, клубри кĕçĕн командăсенчен суйласа илнĕ пултарулă çамрăксен шучĕпе вăйланчĕç.

Мускавра кăçалхи, майăн 6-мĕшĕнче футбол çезонне уçнă чухне, „Спартак" „Динамона" 2:1 шутпа çĕнтерни ку командăсен хушшинчи кĕрешĕве тата ытларах çивĕчлентерет. Мĕншĕн тесен, реванш вăхатĕнте „Динамо", паллах, мала тухас тесе, пĕтĕм вăйне хурать, унăн мала тухма шанчăк та пур.

Кийевлансем, хăйсен ретне çĕнĕрен темиçе пысăк маçтăрсем хутшăнтарса, футболла тĕлпулусене активлăн хатĕрленеççĕ. Çавăн пекех Тбилиси командине те пултарулă çамрăксем нумай хутшăннă.

ССР Сойузĕнчи пĕрремĕш вырăна тухассишĕн выçасси майăн 10-мĕшĕнчен пуçласа кăçалхи октаберĕн 30-мĕшĕнче вĕçленет. Асăннă командăсемсĕр пуçне, мала тухма шанчăк паракансем тата та пулĕç. Вĕсен пултарулăхĕ выçанă вăхăтра палăрĕ. „Металлург", „ЦДКА", „Стахановец", „Трактор", çавăн пекех ыттисем те чылайăшĕ ССР Сойузĕн чемпионĕсем пулма пултарĕç. Ку пĕтĕмпех совет футболĕн йухăмĕ массăлă пулнăран, партипе правительствă тата Ленинла комсомол ăна куллен пулăшса, тăнăран килнĕ.

1938 çулта пирĕн футбол календарĕсем—совет футболисĕсен пур сийĕсене те — шкул ачисенчен, колхозниксенчен, рабочисенчен пуçласа маçтăрсен командисем таранах—саварса илекен пысăк ответлă мероприйатисем пулса тăраççĕ.

Календарти вăйăсен тĕп вырăнĕнче ССР Сойузĕн малти вырăнĕшĕн тата ССР Сойузĕн кубокĕшĕн кĕрешесси пулать. Совет Сойузĕнче малта тухассишĕн кĕрешес майпа пулакан вăйăсем спорт маçтăрĕсен 26 команди хушшинче пулаççĕ. ССР Сойузĕн кубокĕшĕн кĕрешессине олимпиадă çистемипе Совет Сойузĕнчи пур командăсем те хутшăнма пултараççĕ.

Унсăр пуçне, йут çĕршывсен командисемпе тĕл пулса выçасси, хамăр çĕршыв хулисен командисен тĕлпулувĕсем пулса иртеççĕ.

Уйрăм командăсем çĕнтерме пултарасси çинчен калас пулсан, Мускаври „Динамопа" „Спартак" командисем хушшинче, çавăн пекех Кийевпа Тбилиси хулисен динамовецĕсем хушшинче кĕрешÿ пулассине палăртмала.

Çĕнĕ командăсемпе пĕрле çĕнĕ вăйăçăсен йачĕсем палăрĕç. Старостинсен, Илйинсен, Йакушинсен, Степанăвсен, Соколовсен хушамачĕсем çумне çĕнĕ хушаматсем хутшăнĕç.

Вĕсем хушшинче, паллах, колхозниксем те, рабочисен поçолкисенче пурăнакансем те пулаççĕ, мĕншĕн тесен, футбол вăййи пирĕн халăхăн пур сийĕсене те анлăн саралнă.

Совет футболĕн опычĕпе класне пирĕн çĕршывăн пур кĕтессисене те сарас тĕлĕшпе физкултурăпа спорт ĕçĕсен пĕтĕм Сойузри комитечĕ ССР Сойузĕнчи рабочисем ытларах пурăнакан нумай хуласенче маçтăрсен командисен матчĕсене ирттерме палăртса тĕрĕç тăвать.

Илертÿлĕ спорт пулса тăрса совет футболĕ телейлĕ совет гражданĕсемшĕн курса лармалли вăйă пулса пысăк вырăн йышăнать. Çав вăхăтрах халăха физкултурăшăн тата пирĕн çĕршыв оборонине вăйлатма агитацилет.

Тĕнче фашисăмĕ пирĕн аслă тăван çĕршыв çине тапăнас пулсассăн, хăйсен сывлăхĕпе тата кăмăлĕле кирек те мĕнле çапаçăва та кайма хатĕрленсе çитнĕ совет футболисĕсем тăван çĕршыв сыхлакансен малти речĕсене çĕршер пинĕн тăрĕç.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

ПАЙАН ТЕАТРСЕНЧЕ:

АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — чăвашла спектаклĕ „Собственность" талон № 199 тата № 200, КИНО-ТЕАТРТА „Страна Советов" саслă филм.

Ача пăхакан кирлĕ

Ыйтса пĕлмеле телефонпа:

ĕç вăхăтĕнче—3—97

ахаç чухне—7—63

Н. Е. БАУМАН йачĕпе тăракан

ХУСАНТИ ГОСУДАРСТВĂ ЗООТЕХНИКĂПА ВЕТЕРИНАРИ ИНСТИТУЧĔ

1938—1939 вĕренÿ çулĕнче

СТУДЕНТСЕНЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ.

Икĕ факултета йышăнаççĕ: 1) ЗООТЕХНИКĂ тата 2) ВЕТЕРИНАРИ. Ку факултетсенче пысăк квалификацилĕ специалиссене—зоотехниксемпе ветеринари врачсене хатĕрлеççĕ.

Институтра вĕренмели срук тăватă çул.

Института пур гражданĕсене те (арçынсене тата хĕрарăмсене) 17 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене (вунă çуллă шкул, рабфак, техникум), йе екстернат йĕрки е вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен илнĕ аттестат пур пулсан. Института илнĕ чух пурне те çак предметсем тăрăх испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхи, политграмăтă, математикă, физикă, хими, географи тата вĕренме кĕрекен хăй килĕшнĕ тăрăх пĕр-пĕр йут çĕршыв чĕлхи. Вăтам шкула йе 10 çуллă шкула отличнă вĕренсе тухнисене çеç испытани тумасăрах илеççĕ.

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ, испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пулаççĕ. Августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшĕччен института илнисене студентсен шутне кĕртеççĕ.

Зайавленисене институт директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала:

тĕплĕн çырнă автобиографи, вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат, виçĕ фото-картăчкă—кашнин çинче хăй ал пусса государствă учрежденийĕнче çирĕплетterни пулма кирлĕ тата çар тивĕçлĕхне (военнобйазăннăйсен) кăтартакан справкă, паспарта пĕрле илсе пымала.

8—1 Адрĕс: гор. Казань, Поле Ершова, дом 22.

Чăваш республикĕнчи утă хатĕрлекен кантура

аслă бухгалтĕр

васкавлă кирлĕ

Ĕçукçи тата хватер килĕшÿ тăрăх

ССР Сойузĕн Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕн кадрсен пайĕнчен ыйтса пĕлмеле.

Телефонсем: 1—40 йе 5—20.

3—3

ЧĂВАШАВТОГУЖТРЕСТА

пассажирсене лартса çÿреме права илнĕ II-мĕш тата III-мĕш класлă

шоферсем кирлĕ

Автомашинăсене йусама

ăста механиксем, слесарсем тата лавăççем КИРЛĔ

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Автогужтрест.

2—2

Чăвашсен Государствă Театр Училишчи

1938—39 ÇУЛСЕНЧЕ ВĔРЕНТМЕ ИЛЕТ

КĂÇАЛ АКТОР УЙРĂМНЕ ИЛЕÇÇĔ

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 4 ÇУЛ

Вĕренме кĕме пур гражданĕсен те (арçынсем, хĕрарăмсем) 17 çулхисенчен пуçласа 30 çулхисем таран, вăтам шкулта 7 çул вĕреннисене илеççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 10-мĕшĕччен йышаççĕ. Испытанисем августăн 20—25-мĕш кунĕсенче пулаççĕ. Ку вăхăт иртсен нимĕнле йышăну та испытани те пулмасть. Вĕренме илнисене валли обшчежити пур, мĕнле вĕреннине кура стипенди параççĕ.

Зайавленисене училищă директăрĕ йачĕпе памала, пĕрле çакнашкал документсем кирлĕ:

1. Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетелствă.
2. Малтан вĕренни çинчен свидетелствă.
3. Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ справкă.
4. Икĕ фото-картăчкă, кашни çине ал пуса çирĕплетмеле.
5. Çар тивĕçлĕхне кăтартакан справкă (военнообйазаннăйсен)
6. Паспарта пĕрле илсе пымала.

Зайавленипе пĕрле çакăнта асăннисенчен пĕр-пĕр документ çук пулсан, комиççи зайавленине те пăхмасть. Испытание комиççи чĕнмесĕр килме йурамасть.

Училищăна вĕренме кĕрекенсене туллимар вăтам шкулсен программи тăрăх испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхи, чăваш чĕлхи, литературă, математикă, политграмăтă тата географи.

Вăтам шкул программи тăрăх пур предметсемпе те „отличнă" вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Анчах вĕренме кĕрекенсене пурне те çак специалнăй дисциплинăсемпе испытани тăваççĕ:

1. Сасса туйни, сăмах йанравĕ.
2. Стихсене, прозăсене, басньăсене илемлĕ вуласси.
3. Пĕр-пĕр темă тăрăх сценă çинче выçама пĕлни.

Испытани тытнисене августăн 25-29-мĕш кунĕсенче вĕренекенсен шутне кĕртеççĕ.

Занятисем сентаберĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Адрĕс: Шупашкар хули, Театралнайа урам, 5.

ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 240

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408